25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 МАРТ 24 ЫТЛАРИКУН 69 (6094) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Василий Александрович Юшкевича генерал-лейтенант званине парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать: Василий Александрович Юшкевича генерал-лейтенант званине парас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти мартăн 21-мĕш.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Калинин фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти мартăн 11-мĕшпе 21-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Калинин фронтĕнчи войскăсем, противника хирĕç çапăçса, мартăн 11-мĕшпе 21-мĕш хушшинче çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: тĕрлĕ калибрлă орудисем—66, танксем—5, минометсем—54, пулеметсем—257, автоматсем—88, винтовкăсем—1000 ытла, радиостанцисем—7, боеприпассем тиенĕ лавсем—42, гранатăсем—2.000 ытла, снарядсем—5.000 ытла, винтовка патронĕсем—200.000 ытла.

Çав вăхăт хушшинчех 23 самолет, 240 автомашина, 17 оруди, грузсем тиенĕ 200 лава яхăн тата боеприпассен 2 складне ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ.

Мартăн 11-мĕшпе 21-мĕш хушшинче Калинин фрончĕн районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 12.000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

В. М. Молотов Великобританин посолне А. Кэрр господина йышăннă

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Великобританин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне А. Кэрр господина йышăннă.

Трактористкăсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ

СĔНТĔР. Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсем кăçалхи уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тата вăхăтра туса ирттерессишĕн Пĕтĕм Союзри трактористкăсене социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе калакине Сĕнтĕр МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Вĕсем трактористкăсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хутшăнса хăйсем çине пысăк обязательствăсем илчĕç. Кашни СТЗ тата ХТЗ тракторпа 400-шер гектар сухалама, СТЗ-НАТИ тракторпа 700-шер гектар сухалама обязательство илчĕç. Горючипе сĕрмелли материалсене 5 процент, ремонт тума уйăрнă укçа-тенкe 3 процент перекетлесе хăварма, трактор ĕçĕн хăйне тăракан хакне 5 процент таран йўнетме пулчĕç. Тракторист Сучков ертсе пыракан трактористкăсен бригади кăçал кустăрмаллă кашни тракторпа 550-шар гектар сухалама пулчĕ.

Ăмăртăва трактористсен курсĕнче вĕренекенсем те хутшăнчĕç. Халлĕхе вĕсем курсра тракторпа ĕçлес искусствăна алла çирĕп илессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн, ытти трактористкăсем пекех, пысăк пахалăхпа ĕçлеме пулаççĕ.

Комсомолец В. Мерлов, В. Алексеева, Е. Чеколова трактористкăсем курсран «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. Ку тарана çитсе кăçал МТС курсран 29 çынна вĕрентсе кăларчĕ, вĕсенчен 11-шĕ хĕрачасем. Пĕтĕмпе курсран 45 çын вĕренсе тухмалла, вĕсен шутĕнче 29 хĕрача.

Г. АНДРЕЕВ.

КУСЛАВККА. Трактористкăсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хутшăнса, МТС-ри трактористкăсем çураки вăхăтĕнче пĕр аварисĕр, пĕр чарăнусăр ĕçлесе, планпа пăхнă задание ирттерсе пурнăçлама обязательство илчĕç. Уйрăмах вĕсем ĕçре вырăнтан вырăна усăсăр куçса çўрессине пĕтерме кирлине паллă турĕç. Кăçал МТС умĕнче тăракан задачăсене кăтартуллăн пурнăçласшăн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, трактористкăсем уйрăм бригадăна пĕтĕçрĕç.

МТС трактористсем хатĕрлекен курсран 38 çынна вĕрентсе кăларчĕ, вĕсенчен 12-шĕ хĕрачасем. Халĕ татах 50 çын тракторпа ĕçлеме вĕренеççĕ.

В. ВОРОЖЕЙКИН.

СĔНТĔРВĂРРИ. Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сўтсе явас майпа МТС-ри комсомолецсен тата трактористсемпе трактористкăсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Ставрополь, Терск тата Кубань таврашĕсенчи малта пыракан трактористкăсен чĕнĕвне ырласа, МТС трактористсемпе трактористкисем социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме Куславкка МТС-ĕн трактористсемпе трактористкисене ăмăртăва чĕнчĕç. МТС-ри тракторсемпе машинăсене пурне те апрелĕн 1-мĕш тĕлне юсаса çитерме пулчĕç.

Трактористсем хăйсем çине илнĕ обязательствăра 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа 340-шер гектар сухалас вырăнне 400-шер гектар сухалама, горючипе сĕрмелли материалсене 5 процент тата ремонт тума уйăрнă укçа-тенкe 5 процент перекетлесе хăварма йышăнчĕç, çуракине чи кĕске срокра туса ирттерме пулчĕç.

Трактористсем хатĕрлекен курсран 30 çын вĕренсе тухрĕ, вĕсенчен 15-ĕшĕ хĕрачасем. Халĕ иккĕмĕш черетпе татах 15 çын вĕренет. Борисова, Юрусова курсанткăсем тракторпа ĕçлеме питĕ те тимлĕн вĕренеççĕ.

ЮРИЧЕВ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен слечĕ

Çак кунсенче Куславкка районĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен слечĕ пулса иртрĕ. Слета ялхуçалăхĕнчи стахановецсем 150 çын ытла хутшăнчĕç.

Слетра 1941 ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1942 çулта тăракан задачăсем çинчен райсовет исполком председателĕ Волков юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик 1941 çулта районри чылай колхозсем, бригадăсемпе звеносем вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе начар мар ĕçленине палăртрĕ. «Динамо», «Правда», «Победа» колхозсем пĕлтĕр ялхуçалăх ĕçне вăхăтра пуçтарнă, государство умĕнчи парăмсене те парса татнă, кăçалхи çуракине те хатĕрленсе çитнĕ. Вĕсен акмалли вăрлăх çителĕклĕ, ялхуçалăх инвентарĕсене, кўлмелли хатĕрсене юсанă, уя тислĕк тăкаççĕ.

Слетра МТС-ри комсорг Демьянов тухса каларĕ. Вăл хăйсен организацийĕнчи комсомолецсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ.

Куславкка МТС-ĕнче Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сўтсе явнă. Трактористсем кăçал кашни тракторпа 500 гектар сухалама, сунтармалли тата сĕрмелли япаласене 5 процентран кая мар перекетлеме обязательство илнĕ. Андрианов тракторист хăйĕн тракторĕпе кăçал 600 гектартан кая мар сухалама шухăшлать. Çавăн пекех трактористсем çĕнĕ кадрсем — трактористсемпе комбайнерсем ытларах хатĕрлеме сăмах панă. Районри вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче 900 çын тракторпа, комбайнпа ĕçлеме вĕренеççĕ.

Районри çĕрĕç пайĕнчи главнăй агроном Копылов юлташ хăйĕн сăмахĕнче комсомол организацийĕсен пайăн-ыран тумалли ĕçсем çинчен каларĕ. Вăл уйрăм организацисен паха ĕçĕсене примерсем илсе кăтартса пачĕ.

Тухса калаçакансем çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсем тата вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен те чарăнса тăчĕç.

Юлашкинчен слетра пулнă çамрăксем СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин патне саламлă çыру ячĕç. Хăйсен çырăвĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансем Калинин юлташа кăçалхи çуракине лайăх хатĕрленсе çитсе кăтартуллă ирттерме шантарчĕç. Вĕсем фронтри пек ĕçлеме сăмах пачĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Мартăн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем фронтăн хăшпĕр участокĕсенче, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Мартăн 20-мĕшĕнче противникăн 35 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 21-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Мартăн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем противникăн 29 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 225 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 60 лавне, 15 орудине, полевой артиллерин икĕ батарейине, зенитнăй пулеметсен 30 точкине, 14 минометне, минометсен 5 батарейине, 1 прожекторне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен икĕ складне взрыв туса сирпĕтернĕ, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен Тоцарев юлташ командир пулса ертсе пыракан танкозăй часть юлашки кунсенчи çапăçусенче нимĕçсен 90 ДЗОТ-чĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, тăшманăн 16 танкне, артиллерин 4 батарейине, минометсен 9 батарейине, 34 орудине, 19 станковăй тата 27 ручной пулеметне, 8 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танкистсем çакнашкал трофейăсем тытса илнĕ: 5 оруди, 10 миномет, 12 станковăй тата 41 ручной пулемет, 50 автомат, 337 винтовка, 5.000 ытла снаряд, 500 граната, боеприпассен икĕ складĕ тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.500 çынна яхăн вилсе пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн пĕр подразделени (Калинин фрончĕ) халăх пурăнакан пĕр пункта, нимĕçсем вăйлăн çирĕплетнĕскере, йышăнса илнĕ. Икĕ кун хушши пынă çапăçура нимĕçсен 10 ДЗОТ-не çĕмĕрнĕ, 6 орудине, пулеметсен 15 йăвине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен, виллисене шутласан кăна, 250 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешен пирĕн пĕр чаçри артиллеристсем пĕр кун хушшинче тăшманăн 3 танкне çĕмĕрнĕ, пĕр орудине пĕтерсе тăкнă тата пĕр самолетне персе ўкернĕ. Кунсăр пуçне, артиллеристсем противникăн минометсен батарейине пусарса лартнă, гитлеровецсене икĕ ротăна çити сапаласа янă.

* * *

Карели вăрманĕсенче кĕрешекен Ж. юлташăн «Красный партизан» ятлă партизанла отрядĕнчи боецсем çĕрле пĕр яла хупăрласа илнĕ те финсен 2-мĕш егерски батальонĕн штабне атакăланă. Сасартăк пырса тапăннине пула нимĕн тума пĕлмен финсем вăрмана таpма хăтланнă, анчах та партизансен пулеметчĕсен вучĕ айне лекнĕ. Çак çапăçу вăхăтĕнче партизансем финсен 67 салтакне, пĕр полковникне тата икĕ майорне вĕлернĕ. Февраль уйăхĕнче партизансен отрячĕ пысăках мар поселоксенче вырнаçнă финсен 3 гарнизонне хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнă. Финсен вилсе тата аманса 200 çынна яхăн пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсен 56-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ кăларнă приказа тытса илнĕ. Генерал фон-Офен хăйĕн приказĕнче çапла çырать: «Салтаксем малти позицисенче службăра пулассинчен, 1918 çулти пек, пур майсемпе те пăрăнма хăтланнине час-часах курма пулать. Çапла ăна ерекен чире пĕтернĕ пекех тĕпренех пĕтерес пулать... Хăшпĕр çĕрте дивизи вăрçа кĕрсе кайнă чухне е походра чухне хĕçпăшалсемпе амуницие, снарядсене т. ыт. сыхлама хăварнă уйрăм командăсем, çавăн пекех тата стройран тухнă машинăсен шоферĕсем хăйсен чаçĕсене халĕ те таврăнман-ха, вĕсем пыраx пурăнаççĕ. Çавнашкал уйрăм командăсем, стройран тухнă машинăсен шоферĕсем тата ытти войсковой чаçсенчен татăлса юлнисем пирĕн дивизи тăнă вырăнта питĕ нумай тĕл пулаççĕ. Ытти чаçсенчен татăлса юлнă уйрăм командăсене хăйсен чаçĕсемпе пĕрлештермешкĕн тата çартан тарма пултарнисене тивĕçлĕ çĕре ăсатмашкăн полкăн, батальонăн хăйсен участокĕсенче палăрнă çавнашкал татăлса юлнисене çийĕнчех тытса чармалла, вĕсем çинчен дивизи командованине пĕлтермелле».

Çапла вара нимĕçсен фашистла çарĕнчи «салтаксем час-часах малти позицисенчи службăран епле те пулсан пăрăнса юлма тата тылра пытанса пурăнма» тăрăшнине Гитлер генералĕн ирĕксĕрех йышăнма тивет. Нимĕçсен салтакĕсенчен нумайăшĕсем, хăйсене кайран хытă айăплассинчен хăраса, çартан тарса кайма уççăнах шут тытмаççĕ-ха. Вĕсем халĕ хăйсен подразделенийĕсенчен юриех çухалса юлаççĕ, ялсем тăрăх нумай вăхăт хушши нимĕн тумасăр çўреççĕ тата хăйсен чаçĕсене таврăнмаççĕ. Гитлеровецсемшĕн çак питех те хăрушă япаласем вĕсене 1918 çула, империализмлă пĕтĕмĕш вăрçăра нимĕçсем поражени тўснĕ çула аса илтереççĕ. Гитлеровецсем çав «ерекен чире» пĕтерсе хума хăтланаççĕ. Анчах та темĕн пек тискер мерăсем те нимĕçсен çарапуçăсăрне пăсăлса, ишĕлсе пырассинчен хăлса хăварма пултараймаççĕ.

* * *

Нимĕçсен нумаях пулмасть фронта килсе çитнĕ унтер-офицерĕ Генрих Шмидт тăван çĕршывне çапла çырнă: «Противника хирĕç пирĕн çапăçса пăхма тиврĕ те ĕнтĕ. Çакă вăл хăрушă япала. Пирĕн нумайăшĕсем вилчĕç. Христиан Кайзер, пĕчĕккскер, полевой кухня патĕнче виллĕ. Егерь Карл та вилчĕ. Нумайăшĕсем ĕнтĕ вилĕ выртаççĕ. Ылханлă вăрçă! Пирĕн пулассăх маншăн çавтери тĕксĕмĕн курăнать».

* * *

Сталино облаçĕнчи Сидоровсем ялĕнчен каялла чакса кайнă чухне нимĕç оккупанчĕсем 71 çурта çунтарса янă. Колхозниксенчен ăшă çипуççемпе апат-çимĕçсене йăлтах туртса илнĕ. Гитлеровецсем 13 çулти Валентина Гуляренкона, 15 çулти Надежда Шевлаковăна, 70 çулти Евдокия Полякова тата 90 çулти Филипп Полякова вĕлернĕ.

* * *

Карпат таврашĕнчи Русь партизанĕсем Венгри оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. С. районĕнче кĕрешекен отряд, венгерсен моторизованнăй колоннине çине тапăнса, бензин тултарнă 7 цистернăна çунтарса янă. Çав отрядах 3 самолет пĕтерсе тăкнă тата хĕçпăшал упракан 2 склада сирпĕнтерсе янă. Юлашки вăхăтра кăна отрядри боецсем Венгрин салтакĕсемпе офицерĕсене 80 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Партизансен тепĕр отрячĕ Т. ялĕ çывăхĕнче хĕçпăшал складне сирпĕнтерсе янă. Çавăн чухне Венгрин 30 салтакĕ [illegible]. Лумачево—Поляна хушшинчи чугунçул çинче партизансем 8 цистерна çине тенĕ, çав цистернăсенчен бензин пĕтĕмпех чугунçул çине юхса тухнă.

Мартăн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Мартăн 22-мĕш ирăн тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн пĕр часть нимĕçсен 4 орудине, 5 станковăй пулеметне, 4 минометне, çар грузĕсем тиенĕ 20 лавне пĕтерсе тăкнă, 3 оруди, 7 миномет, 8 пулемет тата 25 автомат тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардейски часть юлашки çапăçусенче противникăн 5 офицерне, 47 унтер-офицерне, 870 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕннисем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 17 оруди, 10 миномет, 23 станковăй пулемет, танксене хирĕç пемелли 10 пăшал, 36 грузовой тата 6 çăмăл автомашина тата ытти çар пурлăхĕсем те.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, гитлеровецсене хирĕç икĕ кун хушши çапăçса, тăшманăн 8 ДЗОТ-ĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, 10 станковăй пулеметне тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 14 оруди, 49 пулемет, 23 миномет, 26 автомат, 297 винтовка, 2 радиостанци, 27.000 винтовка патронĕ, 3.500 мина тата 5 ещĕк мина, 500 снаряд, боеприпассемпе обмундировани склачĕ, 8 километр тăршшĕ телефон кабелĕ, танксене хирĕç пемелли пăшалсем, пистолетсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1.600 вилли выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн хăшпĕр участокĕсенче противник темиçе хутчен те контратака тума хăтланнă. Çав контратакăсене, тăшмана пысăк çухатусем кўрсе, сирсе пăрахнă. Фронтăн пĕр участокĕнче кăна икĕ кун хушшинчи çапăçусенче гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 500 çынна çити вилсе пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн 4 летчик боевой задание пурнăçланă чухне сывлăшра противникăн 9 самолечĕпе тĕл пулнă. Тăшман йышлăрах пулнă пулин те, совет истребителĕсем нимĕçсене çисĕмле атакăланă. Çапăçу 10 минута хушши пынă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен 5 самолетне персе антарнă. Ытти самолечĕсем каялла çавăрăнса тарнă. Çак çапăçура группа командирĕ майор Зайцев нимĕçсен икĕ самолетне, капитан Песков, капитан Дмитриев тата старши лейтенант Бундилев пĕрер самолет персе антарнă. Пирĕн самолетсем хăйсен аэродромĕ çине пурте ăнăçлăн таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне гитлеровецсем хăйсен çулĕ çинче ялсене вут тивертсе çунтараççĕ, вырăнти халăха хăйсемпе пĕрле хăвалаcа каяççĕ. Калинин облаçĕнчи К., В., Д. тата Г. ялĕсенчи колхозниксем, каялла чакакан нимĕçсем сывхарса пынине пĕлсен, партизансен отрячĕн командирĕ Ч. юлташ патне кайнă та хăйсене нимĕçсен фашистла бандичĕсенчен çăлса хăварма ыйтнă. Партизансем нимĕçсен çак ялсенчи гарнизонĕсене вĕлерсе пĕтернĕ те нимĕçсенчен тытса илнĕ хĕçпăшалпа колхозниксен пысăк группине хĕçпăшаллантарнă. Нимĕçсен 45 çынран тăракан отрячĕ К. ялĕ патне сывхарса пыма тăрсан, партизансемпе хĕçпăшаллă колхозниксем тăшман çине пулеметсемпе винтовкăсенчен пеме тытăннă. Нимĕçсем, 14 çынна, вăл шутра пĕр лейтенантпа икĕ обер-ефрейтора, çухатса хăварса, каялла чакнă. Нимĕçсен кунтан та пысăкрах 2-мĕш отрядне те партизансемпе колхозниксем çавăн пекех аркатса тăкнă. Нимĕçсен тĕп вăйĕсем партизансене хирĕç çапăçăва кĕмен. Вĕсем ял патĕнчен пăрăнса кайнă. Çапла майпа колхозниксем, партизансемпе пĕрле пулса çапăçса, хăйсен ялĕсене гитлеровецсенчен çăлса хăварнă, нимĕçсене пысăк çухатусем кўнĕ. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç пулнă çапăçура пулеметчикпа Татьяна Е. тата учительница Клавдия О. уйрăмах пысăк хаюлăхпа паттăрлăх кăтартнă.

* * *

Нимĕçсен унтер-офицерĕ Гифенбайн нумаях пулмасть хăйĕн арăмĕ патне çапла çырнă: «Фронт патне çывхарсан, шăнă чухне эпир хăйсен чаçĕсенчен татăлса юлнă нимĕç салтакĕсене куратпăр. Вĕсем вилĕмрен çăлăнса юлнипе тĕлĕнмелле. Вĕсем пире çапăçури хăрушлăхсем çинчен каласа пăраççĕ. Кунта эпĕ хам мĕн тўссе ирттернине пĕтĕмпех тĕплĕн çырса кăтартаймастăп. Пĕр сăмахпа каласан, эпир тамăка лекрĕмĕр. Кунта партизанла вăрçă хĕрсех пырать. Пырса кĕретĕн пĕр пĕчĕк яла та, пур çĕртен те переççĕ. Эпир ĕнтĕ нумай юлташсене çухатрăмăр».

* * *

Сталино облаçĕн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Голая Долина ялĕнче силос шăтăкĕнче арçынсемпе хĕрарăмсен 10 виллине тупнă. Çаксене гитлерла мерзавецсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Вĕсен ўчĕсем çинче çĕçĕпе чиксе, пăшалран персе пулнă суранĕсем пур. Вĕсенне хăлхисене касса илнĕ, аллисемпе урисене пăрса лартнă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Казахстанра нумай çĕрте ухута вырăнĕсем тăваççĕ

Казахстанра тусемпе çеçен хирсенче тем чухлех кайăк-кĕшĕк пурăнать, пĕчĕк кўлĕсемпе юханшывсенче хаклă йышши хĕрлĕ пулă нумай ĕрчет. Çак çулта кунта çĕнĕрен 140 тĕлте ухута вырăнĕсем организацилеççĕ, унта тĕрлĕ кайăк-кўшĕксем, пулăсем тытма пуçлаççĕ. Халĕ ăçта кирлĕ унта тар, пăшалпа пемелли вак йĕтресем, тананасем, сĕрекесем, капкăнсем, ухута ĕçĕнче кирлĕ ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем те тăвас ĕçе пикенсех тытăннă. Каспи тата Арал тинĕсĕсем çинче, Ала-Куль кўлĕре кăçал пуçласа çаксене хатĕрлеме паллă туса хунă: чайка, баулин, пиликан кайăксене пĕр миллион çăмарта пухмалла. Çав çăмартасем супăнь тунă çĕре каяççĕ. Вырăнти промышленность предприятийĕсем тимĕр шапа кăкайĕнчен консерва тăвас ĕçе вĕренсе çитеççĕ. Тимĕр шапан панцирĕ тўмесем, портсигарсем тата ытти куллен кирлĕ таварсем тунă çĕре каймалла. (ТАСС).

Сахăр кăшманĕ акма тытăннă

ФРУНЗЕ, мартăн 21-мĕш. (ТАСС) Чуйски айлăмра сахăр кăшманне акма тытăннă. Каганович районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозпа «Красная Армия» колхозра ултă гектар акнă те ĕнтĕ. Ĕнер Кантски тата Ворошилов районĕсенче акма тытăннă.

Кăçал сахăр кăшманĕ акмалли çĕр лаптăкĕ республика тăрăх пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытла пулать.

ХĔРЛĔ ÇАР ВАЛЛИ ТИВĔÇЛĔ РЕЗЕРВСЕМ ХАТĔРЛЕР. **Укерчĕк çинче:** Фрунзĕри кавалери клубĕн тактикăллă занятийĕсенче Кеминскри районри всевобуч боецĕсем «атакăна» кĕреççĕ.

М. КОРОЛЕВ фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин тиражĕ

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин тиражĕ Мускавра мартăн 25-мĕшĕнче пулса иртет.

Лотерея билечĕсене малтан пĕр миллиард тенкĕлĕх кăларма йышăннăччĕ. Анчах та лотерея билечĕсене халăх нихăçан та хавхаланса илнипе лотерейăна пĕр миллиард та 400 миллион тенкĕлĕх кăларма тивнĕ. Çавăнпа вара халĕ выляра тухмалли выигрышсен хисепĕпе суммине те тивĕçлĕ таран ўстернĕ.

Мĕнпур лотерейăра укçаллă выигрышсем 2.071.500 выигрыш пулаççĕ, пĕтĕмĕшпе илсен — 265 миллион тенкĕлĕх, япала выигрышĕсем 28.500 выигрыш, пĕтĕмĕшпе илсен—15 миллион тенкĕлĕх.

(ТАСС).

„Нимĕç войскисене Мускав патĕнче аркатни“ кинокартинăна пĕтĕм тăван çĕршыв пăхать

Тăван çĕршывăн нумай хулисенче халĕ питех те пысăк ăнăçупа «Нимĕç войскисене Мускав патĕнче аркатни» кинокартинăна кăтартаççĕ. Барнаулра, Куйбышевра нумайăшĕ ку картинăна пăхма кинотеатра 2—3-шер хут каяççĕ. Ку картинăна курма хуласем çывăхĕнчи ялсенчен колхозниксем, ытти интеллигенци ушкăнĕ-ушкăнĕпе хулана пыраççĕ.

Ростоври «Гигант» кинотеатрта хăйсен тăван хулине фашистсенчен ирĕке кăларасшăн çапăçнă геройсем, фашистсен хăрушла ирсĕр ĕçĕсене тўссе ирттернĕ патриотсем çак картинăна пăхнă чухне Мускава хўтĕлекен паттăрсене хавасланса алă çупса саламланă.

Архангельскри кинотеатрсенче фильм 22 кун пынă. Çав хушăра ăна 52 пин çын ытла пăхнă. Çитес кунсенче ку картинăна ненецсен нациллĕ округĕнче тата инçетри ытти облаçсемпе районсенче те кăтартма пуçлаççĕ. (ТАСС).

Чкалов самолечĕ

Чкалов Байдуковпа Беляков юлташсемпе пĕрле 1937 çулта Çурçĕр Полюсĕ урлă Çурçĕр Америкăна вĕçсе кайнă самолета çак кунсенче Горький облаçĕнчи Чкаловскри В. П. Чкалов ячĕпе тăракан музее илсе пынă. Ăна пайăн-пайăн турттарса килнĕ. Самолет маламне çак музейре усранать. Халĕ самолетăн моторне, пропеллерне, хўрине тата ытти хăшпĕр пайĕсене те халăха кăтартма музейĕн выставка павильонĕнче вырнаçтараççĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступленилле çапăçусем туса пынă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче противник контратакăсем турĕ, анчах та вĕсене пирĕн войскăсем противника пысăк çухатусем кӳрсе сирсе пăрахнă.

Мартăн 21-мĕшĕнче нимĕçсен 53 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 14 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 21-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 12 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 190 автомашинине яхăн, боеприпассем тиенĕ 80 лавне, 51 орудине, зенитнăй пулеметсен 8 точкине, 30 минометне пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 8 вагона тата пĕр паровоза взрыв туса сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ батальона çити саппаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 800 çын ытла вилнĕ. Пирĕннисем çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: 23 оруди, 59 пулемет, 13 миномет, 30 автомашина тата винтовкăсемпе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Крым фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем малалла куçса пынине чарса лартас тесе, нимĕçсем темиçе хут та контратакăсем турĕ, анчах та вĕсене пирĕн войскăсем противника пысăк çухатусем кӳрсе сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер салтакĕсемпе офицерĕсем вилсе тата аманса выртса юлнă. Пĕр кун хушшинче пирĕн пĕр часть нимĕçсен 15 танкне персе çĕмĕрнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн позицисене хирĕç контратака тума хăтланнă противника пирĕн войскăсем çавтери вăйлăн сирсе пăрахнă, каялла чакнă чухне противник çапăçу хирĕнче 17 танк пăрахса хăварнă, вĕсенчен 8-шĕ юсавлисемех.

* * *

Пĕр ял патĕнчи çапăçура Хомутовпа Тугов красноармеецсем нимĕçсен блиндажне чи малтан çĕмĕрсе кĕнĕ те, гранатăсем ывăтса, 26 гитлеровеца вĕлернĕ, 4 станковăй пулемет тата фашистсен ялавне тытса илнĕ.

* * *

Аялрахра Смоленск облаçĕнчи партизансен икĕ отрячĕн, «Ураган» тата «Девушка» ятлăскерсен, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешме пĕрлешнĕскерсен, дневникĕнчен хăшпĕр выпăскесене илсе пичетлетпĕр:

«**Январĕн 21-мĕшĕ.** Нимĕçсен 60 çынтан тăракан карательнăй отрядне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкрăмăр. Нимĕçсен мĕншур хĕçпăшалĕ пирĕн боецсен аллине куçрĕ.

Январĕн 31-мĕшĕ. Нимĕçсен иккĕмĕш карательнăй отрядне, 48 çынтан тăраканскерне, пĕтерсе тăкрăмăр, мĕншур хĕçпăшалсене тытса илтĕмĕр.

Февралĕн 12-мĕшĕ. Б. ялĕн районĕнче нимĕçсен йĕлтĕрçисене вăрттăн кĕтсе илтĕмĕр. Автоматсемпе винтовкăсенчен персе, 20 салтака вĕлертĕмĕр, 13 винтовка, 3 автомат тата 4 пистолет тытса илтĕмĕр.

Февралĕн 13-мĕшĕ. Нимĕçсен обоза хураласа пыракан темиçе салтакне вĕлертĕмĕр тата продовольстви тиенĕ 6 лавне тытса илтĕмĕр.

Февралĕн 14-мĕшĕ. Пали—хĕрӳ кун. Разведка пирĕн база патне нимĕçсен икĕ отрячĕ çывхарса килни çинчен пĕлтерчĕ. Хамăр вăйсене малтанах кирлĕ пек вырăнаçтарса туха, нимĕçсене пулеметран персе кĕтсе илтĕмĕр. Партизансен пĕр групи нимĕçсен 42 салтакне тата обер-лейтенантне вĕлернĕ, тепĕр групи 35 гитлеровеца вĕлернĕ, вилнисен мĕншур хĕçпăшалĕсем: винтовкисем, пулемечĕсем, автомачĕсем пурте пирĕн алла куçрĕç.

Февралĕн 16-мĕшĕ. Засада турăмăр та нимĕçсен отрядне пĕтерсе тăкрăмăр. Фашистсен 30 салтакĕ вилсе пĕтрĕ. Эпир 22 винтовка, пулемет, 8 автомат, 3.000 патрон, хут пичетлекен 2 машина, 4 радиоустановка, колхозниксенчен çаратса пухнă пурлăхпа продовольстви тиенĕ 48 лава тытса илтĕмĕр».

* * *

Випурирен аякрах мар финсен йĕлтĕрлĕ батальонĕпе нимĕçсен артиллери полкĕ вăйлăн тытăçса илнĕ. Гитлеровецсем вырăнти сакăр хĕре тытса пусмăрланине пĕлсен, финсем нимĕçсен артиллеристĕсем вырăнаçнă барак çине тапăннă. Тытăçура пулеметсемпе автоматсенчен пеме пуçланă. Икĕ енчен те вилнисемпе аманнисен хисепĕ пурĕ 150 çынна çитет.

Мартăн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем вăйлă çапăçу хыççăн халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ. Противник техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Тепĕр участокра пирĕн пехотинецсем, тăшманăн темиçе контратакине сирсе пăрахса, нимĕçсен икĕ ротине çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура (Калинин фрончĕ) пирĕн танковăй часть нимĕçсен икĕ йывăр орудине, минометсен икĕ батарейине, 15 пулеметне, танксене хирĕç пемелли 10 орудине пĕтерсе тăкнă, 27 ДЗОТ-пе блиндажне аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, тăшманăн вăйлăн çирĕплетнĕ паха пунктне тытса илнĕ, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна пĕтерсе тăкнă. Пирĕн часть çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 5 оруди, 2 станковăй тата 7 ручной пулемет, 100 ытла винтовка. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем 300 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ, икĕ оруди тата 10 станковăй пулемет тытса илнĕ.

* * *

Нечаев сержантăн оруди расчечĕ, тӳрĕ тĕллесе персе, тăшманăн икĕ пулеметне, пĕр минометне тата 5 ДЗОТ-не пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград партизанĕсен В. тата П. юлташсем командир пулса ертсе пыракан отрячĕсем тăшман тылĕнче чугунçул çине минăсем хурса тухнă та противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çакна пула 4 вагон пĕтĕмпех çĕмĕрĕлнĕ. 200 гитлеровеца çити вилнĕ тата аманнă.

* * *

Нимĕçсен 20-мĕш танковăй дивизийĕн 112-мĕш мотополкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Либш çапла каласа панă: «Январĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 12-мĕшне çитиччен эпĕ командировкăра пулнă. Çав вăхăтра манăн ротăра 120 çынран 18 çын кăна чĕрĕ юлнă».

* * *

Нимĕçсен 101-мĕш дивизийĕн 229-мĕш полкĕнчи штабной ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Максимилиан Войталла çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть манăн Германи тылĕнче, Хейльбронн хулинче пулмалла пулчĕ. Халăх выçăпа аптăрать. Пур çĕрте те вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк черетсем. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче çавтери пысăк çухатусем пулни çинчен пĕлтернисем халăха питĕ хăратаççĕ. Хейльбронн хули аманнисемпе тулса ларнă. Пур больницăсемпе шкулсенчен те госпитальсем тунă. Лазаретсемпе госпитальсенчен тухнă салтаксем тепĕр хут фронта таврăнасшăн мар, вĕсем тĕрлĕрен сăлтавсем тупса тыла, ăçта та пулин аяккарах кайма тăрăшаççĕ. Анчах та пурне те çакăн пек тума май килмест. Çамрăксем пурте фронтра. Халĕ çар службине начар сывлăхлă çынсене те илеççĕ. Акă, тĕслĕхрен, манăн тăван Франц Войталла хăлхасăр, анчах та ăна çара илнĕ».

* * *

Штутгарт районĕнчи пир-авăр фабрикинче (Германия) ютçĕршыв рабочийĕсем выçăпа аптăраса вилеççĕ. Рабочисене кун каçиччен кăвакарнă çĕмĕрпа пăтратса хатĕрленĕ шӳрпе тата 50 грамм çăкăр кăна пăраççĕ. Февраль уйăхĕн вĕçĕнче кăна выçăпа аптăраса 40 çын вилнĕ. Тарăхса çитнĕ рабочисем поляксем, итальянецсем, французсем нумаях пулмасть фабрикăри продовольстви магазинне аркатса тăкнă. Çавăнта чĕннĕ штурмовой отрядсем пулеметсемпе пăшалсенчен пеме тытăннă. Ютçĕршывсенчи рабочисем 60 çын тата вырăнти çынсем 12 çын вилнĕ.

Столицăри çамрăк хĕрарăмсен активĕн пухăвĕ

Мартăн 22-мĕшĕнче Союзсен Çуртĕн колоннăй залĕнче столицăри çамрăк хĕрарăмсен активĕн нумай çынлă пухăвĕ пулса иртнĕ. Кунта предприятисенчи çамрăк стахановкăсем, студенткăсем, сандружинницăсем, санитаркăсем, медсестрасем, летчицăсем т. ыт. те пухăннă.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Михайлова юлташ совет хĕрĕсене çар специальноçĕсене алла çавăрса илме, совет халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн çапăçакан уйăлкисемпе тата шăллĕмĕшĕсемпе пĕр ретре тăмаллăх хатĕр пулма чĕнсе каланă.

Бригаднăй врач, профессор-хирург Гончаровская, капитан Салбиева тата Совет Союзĕн Геройĕ Гризодубова юлташсем фронтри совет хĕрарăмĕсен боевой ĕçĕсем çинчен каласа панă.

ВЦСПС секретарĕ Николаева юлташ хĕрарăм çамах тухса каланă. Вăл совет хĕрарăмĕсем умĕнче тăракан хисеплĕ задачăсем пирки—çар пĕлĕвĕсене алла çавăрса илесси, нимĕç захватчикĕсене хирĕç çирĕплĕхпе паттăррăн тĕслĕхсем кăтартса кĕрешесси пирки чарăнса тăнă.

Николаева юлташ хăй Англи работницисемпе тĕлпулни çинчен, хăйсен тăван çĕршывне нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлеме упăшкисемпе пĕрле тăнă Лондонри тата Великобританин ытти хулисенчи хĕрарăмсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Мускаври çамрăк хĕрарăмсен активĕн пухăвĕ пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташ патне салам янă. Залăн пур кĕтесĕсенчен те: «Сывă пултăр аслă Сталин!», «Совет хĕрарăмĕсем сывă пулччăр!», «Паттăр Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!» тесе кăшкăрнисем илтĕнне.

Патриоткăсен пухăвĕ «Интернационал» юрланипе хупăннă. (ТАСС).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). Капитан-орденоносец Я. И. Покатилов командир пулса ертсе пыракан эскадрон Смоленск облаçĕнчи халăх пурăнакан пунктсене фашистсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан çĕнтерӳллĕ çапăçусенче питех те ăнăçлăн кĕрешет. **Укерчĕк çинче:** эскадронри боецсем разведкăна каяççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Йĕлтĕрçĕсем нимĕçсен батальонне аркатса тăкнă

КАЛИНИН ФРОНЧĔ. **(Телеграфпа, хамăр спецкортан).** Кузнецов командир ертсе пыракан боец-йĕлтĕрçĕсем нимĕçсен пехотин вăйлăлатнă батальонне аркатса тăкнă. Пирĕн пĕр чаçăн фланчĕ патне тухма хăтланса, фашистсен батальонĕ артиллерипе пĕрле яла пырса кĕнĕ. Тăшманăн капнни утăмне сăнаса тăнă йĕлтĕрçĕсем çакна кĕтнĕ те ĕнтĕ. Юр тăрăх хуллен шуса пырса, вĕсем фашистсене виç енчен те хăвăрт хупăрласа илнĕ те каялла чакмалли çула татма тытăннă.

Йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ нимĕçсем хирĕç тăма хăтланса пăхнă, анчах автоматран вĕлермеллех персе тăнине тӳсеймен. Çакă вĕсен шăпине татса панă. Çапăçу хирĕнче 400 салтакăн тата 12 офицерăн виллисем выртса юлнă. Çăлăнса тухса каялла чакма сахаллăшĕсен çеç май килнĕ. Малтанлăха шуплаçа пăхнă тăрăх, йĕлтĕрçĕсем 12 станковăй тата 13 ручной пулемет, 2 миномет, 2 рации, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем, винтовкăсем, автоматсем тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

Фронтăн тепĕр участокĕнче хупăрласа илнĕ нимĕç гарнизонĕсене пĕтерессишĕн çапăçусем пыраççĕ. Çав вăхăтрах Н-ски соединенин чаçĕсем çывăхра выртакан пĕчĕк пунктсене противникран тасатаççĕ. Противник вĕсене хăйăлличе тытса тăма хăтланать. Хăшпĕр ялсем пĕр-пĕрин аллине темиçе хут та куçаççĕ.

Çак кунсенче пехота подразделенийĕ нимĕçсен çирĕплетнĕ пунктĕ çине наступлени туса пынă. Дубовик лейтенантăн танкĕ яла пехотăпа пĕрле вăркăнса кĕнĕ те икĕ ДЗОТ-а, икĕ противотанковăй орудие, виçĕ минометa, салтаксемпе офицерсене 20 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Анчах унтан танк мина çине пырса кĕнĕ та чарăннă, нимĕçсем пирĕн пехотăна хĕсме пултарнă. Фашистсем çĕмĕрĕлнĕ танкăн экипажне тыткăна илме тăрмашнă. Çапах та Дубовик лейтенант, Трофимовпа Максимов сержантсем тата Малай красноармеец пулеметран тата тупăран персе тăнипе çав тăрмашусене пурне те сире-сире пăрахнă. Экипаж парăнманнине кура, фашистсем танка виçĕ хут чĕртсе яма хăтланнă, çапах та танкистсем капнинчех çулăма сӳнтернĕ. 50 сехет хушшинче вĕсем тăшманăн пур атакисене те сире-сире пăрахнă, нимĕçсене пысăк çухату кӳнĕ.

Вăйсене тепĕр хут пухнă хыççăн пирĕн пехота фашистсене ялтан çĕнĕрен хăваласа кăларнă та унта çирĕппĕн вырнаçса ларнă. Танка çийĕнчех юсанă. Халĕ Дубовик лейтенантăн паттăр экипажĕ çĕнĕ боевой заданисене пурнăçлать.

(«Красная Звезда» хаçатран).

18 нимĕç тыткăна парăннă

КАНТАР ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ. **(«Правда» хаçатăн спецвоенкорĕ).** Фронтăн пĕр участокĕнче тăшманăн оборона линине татса кĕрсе, пирĕн чаçсем нимĕçсене вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ, вĕсене çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе ларма памаççĕ. Противник урса кайсах хирĕç тăрать. Вăл контратакăсем тума пăхать, анчах çав контратакăсене пирĕн боецсем çирĕппĕн сире-сире пăрахаççĕ.

Артиллерин Н-ски батарейи çине 70 нимĕç пырса тапăннă. Боецсем вĕсене, пĕтерсе тăракан вут-çулăмпа кĕтсе илсе, каялла чактарчĕç. Артиллеристсем нимĕçсен 13 çынлă пĕр ушкăнне çавăрса илчĕç. Пуçланса кайнă тытăçура 8 фашист вилчĕ, виççĕшĕ тыткăна парăнчĕç.

Пирĕн разведчиксем чăрсăррăн çапăçаççĕ. Николаенкăпа Баландин разведчиксем, хăйсен чаçĕсене таврăннă чухне, фашистсем вырнаçнă пӳртсем ăшне гранатăсем вăркăнтарнă. Нимĕçсем хăраса ӳксе, пӳртсенчен урамалла чупа-чупа тухнă.

— Парăнăр, ахаль пурне те пере-пере вĕлеретпĕр!—татса каланă вĕсене боецсем.

Лешсем перкелешме пăхнă, анчах кăштах хирĕç тăма хăтланнă хыççăн 18 салтак аллисене çĕкленĕ. Разведчиксем пурне те вĕсене тыткăна илнĕ.

Ĕнер пирĕн тепĕр часть кĕрешекен районра фашистсен пĕрремĕш пехотнăй дивизийĕн 93-мĕш полкĕнчи 5 румын салтакĕ тыткăна парăннă. Салтаксем çапла каланă:

— Румынсем татах та хăюллăнрах тыткăна парăннă пулĕччĕç, анчах та вĕсене офицерсем хытă сăнаса тăраççĕ,—тенĕ.

У. ЖУКОВИН.

Кронштадт хĕрарăмĕсем

КРОНШТАДТ, мартăн 21-мĕш (ТАСС). Кронштадтри работницăсем тата килхуçи хĕрарăмĕсем çарпа флота пĕтĕм вăйран пулăшма тăрăшаççĕ.

Н-ски заводра ĕçлекен работницăсем фронта кайнă упăшкисемпе пиччĕшшĕллĕсен профессийĕсене ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ. Фуксон юлташ начальник пулса тăракан объектра хĕрарăмсен йышĕ икĕ хут ытла ӳснĕ. Стахановка Александрова фронт валли çĕнĕ изделисем хатĕрлес ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл хăйĕн юлташĕсене çак ĕçе вĕрентет. Конкина, Рунова юлташсем тата ыттисем те чылайĕшĕсем нормăран кулленех иккĕшер хут ытларах ĕçлесе пыраççĕ.

Килхуçи хĕрарăмĕ Михайловăн ачи фронтра кĕрешет, хăй вăл оборона строительствинче хастаррăн ĕçлет. Действующи çарти доброволец Худояров арăмĕ тата ыттисем те оборона строительствинче пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ. Хĕрарăм грузчиксем Морозова юлташ ертсе пыракан бригади те порта пысăк пулăшу парĕ.

Çапăçура илнĕ опыт

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, мартăн 22-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Волков красноармееца Н-ски чаçра чи лайăх снайпер тесе шутлаççĕ. Çапăçура вăл пăлханмасть, лăпкă. Мĕнле вырăнтан тата хăш вăхăтра пемеллине, мĕнле пемеллине вăл витĕр пĕлсе тăрать.

Волков хăйĕн юлташĕсене те хăй пекех лайăх пеме вĕрентет. Нумаях пулмасть кăна Волков юлташ боевой позицийĕн малти линийĕнчех боецсен пĕр группине практикăллă занятти пекки туса ирттернĕ. Засада валли мĕнле вырăн тупса, вăл хăйĕн группине вырнаçтарнă та, çак условире мĕнле пемелли çинчен кĕскен каласа панă хыççăн, хăйĕн ученикĕсем умĕнчех нимĕç салтакĕсене, блиндажран блиндажа чупса куçаканскерсене, пĕрин хыççăн теприне, 8-шне те пере-пере вĕлернĕ.

Волков вĕрентни ахаль иртмен. Чаçри боецсем снайперсен опытĕпе ытларах та ытларах интересленме тытăннă. Çамрăк снайперсем—Тупиковпа Трофимов юлташсем—перес ĕçре Волков меточĕпе усă курса, малтанхи тытăçурах тĕл персе 11 фашиста пĕтерсе тăкнă.

Финсен йĕлтĕрлĕ икĕ отрядне пĕтерсе тăкнă

Карели фронтĕнчи пирĕн пĕр коммуникаци çине финсен йĕлтĕрлĕ отрячĕ тапăннă. Тăшмана хирĕç лейтенант Серомохов юлташ командир пулса ертсе пыракан отрядăн боецĕсем тухнă. Тытăçу вăраха та пыман—пирĕн боецсем финсен фашистла бандине пуçĕпех пĕтерсе тăкнă.

Финн фашисчĕсен разведкăри çавнашкал группине тепĕр çĕрте те пирĕн боецсем пĕтĕмпех тенĕ пек пĕтерсе тăкнă: тăшманăн салтакĕсем 45 çын вилнĕ, 8 çын аманнă. Пирĕн боецсем 40 автомат тата ытти трофейăсем сахал мар тытса илнĕ. (ТАСС).

Гитлерăн „çуркуннехи“ салтакĕсем

Вĕсем Францире пурăннă, унти халăха çаратнă, ĕçсе ӳсĕрĕлсе ирсĕррĕн аснă. Çакă вăл çĕнтерӳçĕсен оккупацилленĕ çĕршыври çăмăл шутрăхçĕ пулнă, кунта вĕсем тем тума та шутлатарнă, тем тума та ирĕклĕ пулнă.

Вĕсем хăйсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне çавтери хăвăрт ăсатассине пачах та кĕтмен. Пулас шухăшне та, çакă вăл çуркунне кăна пулĕ тесе шутланă вĕсем, уйчченлĕхе вĕсем полицейскисем вырăнĕнче пикенсех ĕçленĕ.

— Францире эпир аван пурăнаттăмăр,—ассăн сывласа, иртнĕ вăхăтна шеллесе аса илет нимĕçсен 365-мĕш пехотнăй полкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Франц Хейндрис.—Эпир ĕрех нумай ĕçеттĕмĕр. Кунта тухса килес умĕн эпир вулăй кун хушши тапти-сыпписĕрех ĕçрĕмĕр.

Çакă ĕнтĕ вăл тĕлĕк пекех вĕçсе иртсе кайнă. Гитлерăн çакă «çуркуннехи» салтакĕсене, Хĕрлĕ Çар наступленине тумине тытса чарас шутпа фронта срокченех хăваласа килнĕскерсене, вырăс хĕлĕ тытса силлесе чĕтретсе ертнĕ.

— Пирĕн йывăр инкек-синкексем тӳсме лекессине эпир çул çинчех тавçăрса илтĕмĕр,—каласа парать 306-мĕш пехотнăй полкран тыткăна лекнĕ ефрейтор Вильгельм Квест.—Çул çинче пире хирĕç тĕл пулакан салтаксемпе калаçнинченех эпир Германи çарĕ каялла чакни çинчен пĕлтĕмĕр. Францири çăмăл пурнăçпа сивĕ Российăри тискер вăрçă хушшинчи уйрăмлăх пирĕнтен капнин чĕрине çивĕччĕн касса кĕчĕ.

Çапла, вăхăтсем улшăнчĕç, вăхăтпа пĕрле çак салтаксен шухăш-кăмăлĕсем те улшăннă. Çакă вăл нимĕçсен командованийĕ фронтăн пирĕн патри участокне Францирен, Бельгирен, Германин шалти хулисенчен хăваласа килнĕ салтаксене пурне те пĕр пекех тырса тивет. Германирен хăйĕнчен килнĕ салтаксем хушшинче Рудольф Пеппингер салтак пур (460-мĕш пехотнăй полкри 2-мĕш рота). Вăл çапла калаçать:

— Эпĕ Германире чухне пур ялпала çине те урăхла пăхаттăм. Йывăрлăхсене ху тӳссе ирттерсен, вĕсене ялапах лайăхрах ăнланатăн. Эпир Германи çарĕ каялла чакни çинчен нимĕн те пĕлмен. Мĕнтери хакла ларать пире çак вăрçă! Темиçе кун хушши эпĕ фронтра пултăм, кунта талпи-сыпписпĕр «санитар!» тесе кăшкăрнă сасă илтĕнет.

Гитлерăн «çуркуннехи» салтакĕсем хушшинчен тыткăна лекнисемпе калаçнă чух та, Германин оккупациллĕ çарĕн дивизийĕсене Францирен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне мĕнтери васкавлăн куçарса килнине ăнланатăн. «Франци дивизийĕсен уйрăм чаçĕсене, вĕсем вырăна килсе çитсе-çитменех, пурте пухăнса çитессине кĕтсе тăмасăрах, çапăçăва кĕртсе янă. Халĕ тыткăна лекнĕ старши стрелок Вернер Дидерихс службăра тăнă артиллери батарейи тĕлĕшпе çавнашкал мыскара пулса иртнĕ те ĕнтĕ. Артиллерин 216-мĕш полкĕ Россиейăна батарейăн-батарейăн киле-киле тăнă. Кашни батарея вара, ыттисем çитессине кĕтсе тăмасăрах, çийĕнчех малти позицие туха-туха кайнă. Çавна пула Вернер Дидерихсăн батарейи артиллерин тĕрлĕ батарейисенчен пухнă дивизиона пырса лекнĕ. Дивизионра тĕрлĕ полксенчи орудисем, фронта васкавлăн куçарса килнĕскерсем, пулнă. Çитменнине çак тĕрлĕ çĕртен пухса пĕтĕçтернĕ дивизионăн нимĕçсен пехотине, çавнашкалах 209-мĕшпе 211-мĕш пехотнăй дивизисен тĕрлĕ чаçĕсенчи салтаксенчен пухнăскерне, пулăшмалла пулнă.

Гитлерăн «çамрăк» салтакĕсем çапăçу ĕçне чаплах мар вĕренсе хатĕрленнĕ, вĕсен çапăçури пахалăхĕ пысăк мар. Вĕсене васкавлăн шинельсем тăхăнтарса, аллисене винтовкăсем тыттарнă та окопа ăсатнă. Запасри полксенче вĕсем питех те сахал вăхăт хушши пулнă, нимĕнех те вĕренсе ĕлкĕреймен. Маршевăй батальонпа Саарбрюкенран килнĕ Рудольф Пеппингер çапла каласа парать:

— Январĕн 23-мĕш числиччен эпĕ заводра слесарь пулса ĕçленĕ. Унтан мана çара илчĕç. Мана çипуç-тумтир пачĕç те тепĕр кунне маршевăй батальонпа тӳрех Брянска ăсатрĕç. Кунта 200 çынна, вăл шутра мана та, «Ю—52» ятлă самолетсем çине лартрĕç те Юхнов патне турттарса кайрĕç. Çаксем вĕсем пурте 35—40 çулти çынсем пулнă. Эпир пырса лекнĕ чаçри хальччен çарта пулнă салтаксем питех те сахалччĕ. Пурне пекех çĕнĕрен килнисемччĕ.

Германи çарĕнчи «çуркуннехи» салтаксен критикăлас кăмăл пур. Ку тăраннчĕсĕ вăрçă вучахĕнче çунса кайнă малтанхи салтак-автоматсем шăпĕн пухăнтарса хăшсăр пулнине аса илсен, халăхри салтаксен çав критикăлас кăмăлĕ пысăклă уйрăмлăх пулса тăрать. Яковлевка ялĕ патĕнче пулса иртнĕ çапăçăва сăнласа кăтартса, ефрейтор Юган Конрад çапла каласа парать:

— Салтаксем Яковлевка патĕнчен чакма ыйтаççĕ. Пирĕн ăна тытса тăма вăй пулман. Старши лейтенант Мерингштабпа çыхăнса, штабран ротăна каялла чакмашкăн ирĕк пама ыйтрĕ. Ăна Яковлевка ялне мĕнле те пулин тытса тăмах приказ пачĕç. Анчах та салтаксем начар çапăçрĕç, вырăссем çывхарсах пычĕç. Вара старши лейтенант пурлăха çунасем çине тиесе ялтан илсе тухса кайма хушрĕ. Пурлăхпа пĕрле тĕрлĕ сăлтавсем çине ярса салтаксем те шăвăнма тытăнчĕç. Ялта никам та юлмарĕ, вара офицер та тухса чупрĕ.

Германи çарĕн çĕнĕрен килсе çитнĕ чаçĕсенче офицерсен кадрĕсем тĕлĕшпе ĕç мĕнле тăни çинчен ефрейтор Франц Хейндрис акă мĕн каласа парать:

— Взводсен командирĕсем фельдфебельсем пулса тăраççĕ, пĕр взвода кĕна лейтенант ертсе пырать. Ротăна старши лейтенант резервист ертсе пырать. Батальона майор-резервист ертсе пырать. Полка подполковник Хюлле ертсе пырать, вăл та резервист.

Тинтерех килнĕ салтаксемпе халăхчен фронтра пулнă «активлă фронтовиксем» текен салтаксем пĕр-пĕрине хирĕçеççĕ.

— Пĕтĕм инкек те вĕсенче кăна,—тесе ӳпкелешет тыткăна лекнĕ ефрейтор Вилли Шур.—Офицерсемпе унтер-офицерсем çĕнĕрен килнĕ салтаксене хытă сăнаса тăраççĕ. Çĕнĕрен килнĕ салтаксенчен нумайĕшĕсем тӳрех тыткăна парăнма пулĕччĕç. Анчах хыçра унтер-офицерпа фельдфебель пулеметпа выртаççĕ пулсан, тыткăна парăнма хăтланса пăх-ха! Тарса пăх-ха, сан хыçра çав «активлă фронтовик» автомата тăрать пулсан. Унтер-офицерсене çакăн пек приказ панă: çапăçу хирĕнчен пăрахса тухакан е тыткăна парăнма шутлакан салтаксене персе пăрахмалла, тенĕ. Кунсăр пуçне, кашни ротăра гестапон икĕ агенчĕ пур. Вĕсем салтаксăн кашни утăмне, уйрăмăнах çĕнĕрен килнисене, сăнаса тăраççĕ.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне çĕнĕрен килнĕ составсемпе маршевăй батальонсенчи салтаксен шухăш-кăмăлĕ нимĕç çарĕн командованине шиклентермеллипех шиклентерет. Пирĕн войскăсен аллине «Рота командирĕсен асра тытмалли» ятлă хучĕ лекнĕ. Ăна нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕн командованийĕ 1942 çулти февралĕн 11-мĕшĕнче кăларнă. Унта çĕнĕрен хушса паракан çынсене подразделенисем тăрăх мĕнле валеçмелли çинчен каланă.

Пĕррремĕш правилăра çапла каланă: «Çĕнĕрен хушса панă çынсенчен кăна тăракан отделени пулмалла мар», тенĕ. Малалла «Асра тытмаллинче» «Германирен килекен тата оккупациленĕ районсенче сарăлакан тĕрлĕрен сплетня сассуйрасене хирĕç кĕрешме» хушнă. Роталсен командирĕсене «вăрçă пула ывăнса çитнĕ, пуçĕрăнчăк та сӳрĕк шухăш-кăмăллă салтаксене хирĕç татăклăн кĕрешме» хушнă.

Гитлерăн «çуркуннехи» салтакĕсем тултан та, шалтан та пачах çар çыннисем пек мар курăнаççĕ. Вĕсене Гитлер Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçланă тухнеки салтаксемпе танлаштарсан, вĕсем лешсем патне яхăнне те пымаççĕ. Вĕсем урăлса пыни, вĕсен вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлĕсем ӳссе пыни Германи çарĕн çапăçури вăй-хăватне малашне те хавшатсах, вăйсăрлатсах пырĕç.

Я. МИЛЕЦКИЙ.

(«Красная Звезда» хаçатран).



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** пирĕн артиллери Ильмень кӳллин пăрĕ тăрăх огневой позици йышăнма куçать (Старая Русса районĕ).

А. ГРИБОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Политотделри ĕçе эпĕ мĕнрен пуçларăм

ЦК ВКП(б) постановленийĕ тăрăх нумаях пулмасть МТС-сенче политотделсем турĕç. Политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсем пур. Вĕсем комсомолăн МТС-сенчи, колхозсенчи организацийĕсене çирĕплетме, комсомолецсен политикăллă пĕлÿне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлеме тивĕçлĕ.

Çавăнпа та эпĕ хамăн ĕçе комсомолăн МТС-ри организацине ура çине тăратассинчен тытăнтăм. Пирĕн МТС-ра комсомолецсем нумаях мар, иккĕшĕ счетоводра, иккĕшĕ токарьте, пĕри кладовщикре ĕçлеççĕ тата тепĕр виççĕшĕ курсра вĕренеççĕ.

Ĕçлеме пуçланăранпа вĕсемпе икĕ пуху туса ирттертĕмĕр. Пухура комсомол пурнăçĕпе производствăллă ыйтусем çинчен сÿтсе явнă. МТС-ра ĕлĕк хуçасăрлăх пулăрнă. Кивĕ, çĕнĕ трактор, плуг пайĕсем унта та кунта выртса çÿренĕ. Сталинград облаçĕнчи комсомолецсен пуçарăвне сÿтсе явнă хыççăн 6 çамрăкран бригада уйăртăмăр. Бригадир пулса ĕçлеме комсомол организацин секретарьне Гурьев юлташа çирĕплетрĕмĕр. Бригада членĕсене камăн ăçта ĕçлемеллине уйăрса панă. Тепĕр кунне занятти хыççăн бригада цехсем тăрăх тухса кайрĕ. Çав кун комсомолецсем 16 коленчатăй вал, 31 плуг тимрĕ, 23 поршень, 41 гильза, 8 шатун, 38 шестерня пухрĕç. Кун хыççăн та бригада членĕсем аван ĕçлесе пычĕç. Мартăн 10-мĕш тĕлне бригада пĕтĕмпе 522 машина пайĕ (6998 тенкĕ те 59 пуслăх) тата 3 тонна тимĕр-тăмăр пухрĕ.

Курсантсем хушшинче политзанятисем туса ирттеретпĕр. Унта отечественнăй аслă вăрçăн фронтĕнчи геройсем çинчен, комсомолецсен хальхи вăхăтри задачисем çинчен, производствăллă ыйтусем çинчен лекцисем, каласусем пулаççĕ. Политзанятти тума пуçланнăранпа курсантсем хушшинче дисциплина йăлтах ÿрăхланчĕ. Унччен çамрăксем хушшинче вĕренме йĕркеллĕ çÿременнисем, япăх дисциплинăллисем пулнă. Халĕ вĕсем вĕренме пĕр сиктермесĕр çÿреме пуçларĕç.

Производствăра стена хаçачĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа эпир редколлеги суйласа хăвартăмăр. Халь «Сталинец» ятлă хаçат тухса тăрать. Унта МТС-ри çитĕнÿсемпе çитменлĕхсем çинчен çутататпăр. Тракторсем юсас ĕçре çиелтен шăйăрттарса кайнисем те пулнă, тракторсене вĕсен пайĕсене пухса пĕтерменсĕрех ремонтран кăларнă. Çакăн çинчен производствăллă канашлура сÿтсе явăмăр тата хаçатра та çыртăмăр. Ку вара пирĕн йăлăна вăхăтра тÿрлетме пулăшрĕ. Халĕ тракторсем мастерскойран аванрах юсанса тухаççĕ.

Комсомолăн МТС-ри организацине йĕркеленĕ хыççăн эпĕ ялти комсомолецсемпе ĕçлеме тытăнтăм. МТС районне кĕрекен колхозсенчен 47 колхозра комсомол организацийĕсем пур.

Нумаях пулмасть, эпĕ комсомолăн «Пучах» колхозри организацийĕнче пултăм. Кунти колхоз çуракине хатĕрленессипе япăх ĕçленĕ пулнă. Колхозниксем хушшинче хаçат-журналсем вуласа парас ĕçе йĕркелемен. Комсомолецсемпе пуху ирттертĕмĕр. Унта ялхуçалăх машинисене юсас, вăрлăх сортлас тĕлĕшпе комсомолецсенчен бригада уйăрса хăвартăмăр. Ку бригада тепĕр кунах ĕçе тытăнчĕ. Мартăн 10-мĕш тĕлне 50 центнер тулă, 30 центнер пăрçа, 30 центнер сĕлĕ сортланă, 16 плуг юсанă. Ку ĕçе вĕсем çамрăксене те хутшăнтарнă. Халĕ колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ.

Анчах пур организацисем те кун пек ĕçлеймеççĕ-ха. Паваркассинчи «Красная Бавария» колхозра колхоз председателĕ пулса комсомолка Антюнова ĕçлет. Кунта çуракине хатĕрленес ĕç начар. Çурхи туллăн вăрлăхĕ çитмест. Колхозра триер пур, анчах унпа усă курмаççĕ. Плугсене, машинăсене юсамаççĕ. Çав вăхăтрах комсомол организацин секретарĕ Герасимов юлташ кунĕ-кунĕпе ÿсĕр çÿрет, вăлах колхозра счетоводра ĕçлесе учет ĕçне япăхлатарса янă. Паллах, кунта пиçĕçлĕ мерăсем йышăнни кирлĕ.

Комсомолăн районри организацийĕсем халĕ икĕрнелĕхе хутшăнса, вăрлăх тасатса сортлама тытăнчĕç. Вĕсем мартăн 20-мĕш тĕлне вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех тасатса, сортласа хурассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ĕçлеме тытăннăранпа эпĕ пурĕ комсомолăн 8 организацийĕнче пулнă. Кашнинчех пухусем туса çуракине хатĕрленес ыйтăва сÿтсе явнă. 4 колхозра Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен чĕнĕвĕ çинчен тата пĕр колхозра Калинин юлташ статьи тăрăх доклад туса патăм.

Эпĕ ĕçсене яланах политотдел начальникĕпе тата комсомол райкомĕн килешсе тăватăп. Ĕçлеме халĕ çеç пуçлатпăр-ха, умра тата та пысăк ĕçсем тăраççĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Çĕрпÿ МТС-чи политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Учительсем—агитаторсем

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвалăĕнчи агитаторсен коллективĕ вăрçă пуçланнăранпа чылай ĕçсем турĕ. Агитколлектива Çĕнĕ Пăвалăĕнчи вăтам шкулти учительница—парти членĕ тата район депутачĕ—М. Ласточкина юлташ ертсе пырать. Коллективра вăл хăй уйрăмăн [illegible].

Агитколлектив 22 çынран тăрать. Кашни агитатора уйрăм колхоз çумне çирĕплетнĕ. Ялсоветре 4 колхоз, вĕсенче кашнинче активлă агитатор пур. М. Ласточкина, З. Степанова—«Ново-Чурино» колхозра, Т. Семеновпа Н. Ермолаева—«Ново-Ишерякаво» колхозра, А. Турхан—«Çăлтăр» колхозра, Абрамовăпа А. Михайлова—«Сатурн» колхозра ĕçлеççĕ тата ыт. те.

Уйрăм агитаторсене илсен, колхозниксем хушшинче М. Ласточкина—13 доклад, З. Степанова—12 доклад, Т. Семенов—10 доклад туса панă. Вĕсем, политикăллă-ăнлантару ĕçне тимлĕн туса пырса, агитколлектив авторитетне нумай çÿле çĕклерĕç.

Агитколлектив ялсоветĕнче колхоз правленине кулленех пысăк пулăшу пама пырать. Политикăллă-массăллă ĕçе туса пынипе пĕрле, вăл колхоз производстви ĕçне те интересленет.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара февралĕн 23-мĕшĕнче кăларнă приказа ялсоветри кашни колхозрах сÿтсе явнă.

Агитаторсен ĕçĕ ÿссех, сарăлсах пырать. Вĕсем пурте тăван çĕршыва фронта пулăшассишĕн, колхозри ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшаççĕ.

Ку вăхăтра агитаторсем çуракине лайăхрах хатĕрленес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеççĕ.

П. ДОКТОРОВ.

СТАХАНОВЛА ĔÇЛЕСЕ ХĔРЛĔ ÇАРА ПУЛĂШАР. Ÿкерчĕк çинче: Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен ткачиха Е. П. Болотина юлташ. Вăл тăйăне панă заданисене яланах ирттерсе тултарать, фабрикăн паллă стахановкисенчен.

Н. МОХОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Чаплă вилĕм

Çав куна хăçан, кам манĕ?
Манмĕ нихăçан!
Сив юр тăрăх утнă Таня,
Утнă çарран.

Утнă вăл тÿссе вăйхаллăн
Шартлама сивве.
Çавă кун виçĕ хăлхаллă
Курăннă хĕвел.

Тен тапса çырма çинчи пĕр
Ваннă, сив витсен.
Çат! чаплăлан тăтаймасăр
Пысăк юмансем.

Тÿснĕ Таня, чĕрĕ юлнă
Пичĕ-куçĕсем,
Юр çинче вăл пăлнă юлнă
Ури йĕррисем.

Утнă хĕр, пуçне усмасăр
Пăхнă вăл васкав:
Ак хура вăрман, унта çăрт,
Лерелле — Мускав.

Хăйĕн çулĕнчен ан чактăр,
Ирттĕр çын тÿссе.
Пурăнас килет, анчах та
Вилмелле, тусcем!

Çамрăклах пуçа хума вăл
Йывăр-çке, тусcем.
Эх, епле хитре Мускавăн
Тÿр урамĕсем!

Ячĕ юлĕ, юлĕ сывă,
Паттăр çын вилсен.
Вилмелле тăван çĕршывăн
Чысĕшĕн, тусcем!

Вилмелле... Çапла кун хушнă.
Утнă ик енчен
Шăпкса кÿтнĕ ушкăн-ушкăн
Нимĕç-йĕрĕнчĕк.

Кăмрăкланнă ванчăк урлă,
Çуннă пÿрт пачен,
Асапра тертленнĕ хурлă
Халăх умĕнчен.

Партизанка çамрăк Таня
Утнă çарран.
Çак хĕре хăçан, кам манĕ?
Манмĕ нихăçан.

Куçĕ умĕнче сиккелнĕ
Пăта йăлличен.
Вилмелле... сывлăхтăр Ленин!
Пĕтмĕр тăшмансем!

Вилĕме çăнне хăватлă
Тăнă хăрсăр хĕр,
Вилмелле... сывлăхтăр Сталин!
Килĕпĕр эпир.

Пурăнма юлать сан, Таня,
Питĕрех сахал.
Вил пăяв çкă анĕ, —
Сывласа юл халь!

Вырăс халăхĕн хăватлă
Уçă сывлăшне
Сывласа ÿстернĕ анлă
Хăвăн пÿ-сине.

Пăяв аннă, тăнă Таня
Нимĕç умĕнче.
Çак хĕре хăçан, кам манĕ? —
Пĕлĕ пур тĕнче.

Пĕлсе тăрĕ пĕтĕм халăх,
Мухтĕ юрринче,
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Юрлĕ пур тĕнче.

УХСАЙ ЯККАВĔ.

Ачасен садне пулăшу

Шупашкар районĕнчи «Трактор» колхоз членĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, Первомайски районри «Октябрь» колхоз урăх çĕртен куçса килнĕ ачасен пĕр садне шефа илнĕ.

Колхозниксем ачасен сачĕ валли кашни кун 30 литр сĕт, 60 çăмарта, çителĕклĕ таран çĕрулми тата пахча-çимĕçсем пама пулнă.

Унсăр пуçне кашни колхозник ачасен сачĕ валли килĕнче пĕрер чăх ÿстерсе пама йышăннă.

Колхоз ачасен садне вут-шанкă енĕпе те пулăшса тăрать.

Пĕтĕм вăя çĕнтерÿ тунă çĕре парар

«Пирĕн çĕршыв çине ăна тураланă чикес шутпа сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕç оккупантĕсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкмалла. Çакна тума пирĕн çарпа пирĕн фронта хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организациленсе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕне ирĕклĕхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ». (Сталин).

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем умне çакăн пек задача лартрĕ, çав задачăна пурнăçлама çул кăтартса пачĕ.

Унтанпа тăватă уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. Сталин юлташăн кăтартăвĕсем парторганизацисен, пĕтĕм совет халăхĕн ĕç программи пулса тăчĕç. Пирĕн районри агитаторсем, коммунистсемпе партире тăман большевиксен çур пинлĕ çарĕ, Сталин юлташăн докладне пысăк хавхаланупа вĕренсе, аслă Сталинăн аслă сăмахĕсене кашни ĕççыннине ăнлантарса пачĕç, рабочисемпе служащисене тата колхозниксене производствăллă плансене кăтартуллăн пурнăçлассишĕн, ялхуçалăхĕнчи пур тĕрлĕ ĕçсене те вăхăтра та пысăк пахалăхпа туса пырассишĕн кĕрешĕве çĕклерĕç.

Сталин юлташăн хĕрÿллĕ чĕнĕвĕпе хавхаланса, пирĕн районри ĕççыннисем хăйсен пĕтĕм вăйне фронта, Хĕрлĕ Çара ĕçлĕн те активлăн пулăшса тăрасси çине хураççĕ. Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерÿ тума! Çак лозунгпа ĕçлеççĕ халĕ районри ĕççыннисем. Отечественнăй вăрçă пуçлансанах вĕсем çĕршыв оборонин фондне тĕрекллĕтме хĕрÿллĕн тытăнчĕç. Мартăн 10-мĕш тĕлне районри ĕççыннисем оборона фондне 593.320 тенкĕ укçа, темиçе пин тенкĕлĕх ылттăн, кĕмĕл тата çавăн йышши хаклă япаласем, 225 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем 4100 килограмм аш-какай, 5.342 литр сĕт, 53 килограмм çу, 4000 çăмарта, 238 килограмм çăм, 70 килограмм сăскантăр, 12.297 килограмм тырă пачĕç. Çак вăхăтрах районри ĕççыннисем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 89 пин тенкĕ укçа пухрĕç, 367 пин тенкĕлĕх укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сыранса илчĕç.

Кашни колхозник, колхозница, кашни рабочипе служащи тăван Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсене тата комиссарсемпе политработникĕсене ăшă кĕпе-тумтирсем тăхăнтарассишĕн чĕререн тăрăшать, вĕсене кирек мĕнле çантăкра та ăнăçлăн çапăçма пулăшать. Вăрçă пуçланнăранпа районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 600 мăшăр çăматă, валкă пусса çĕленĕ 360 мăшăр фуфайкăпа шалавар, 820 мулахай, 890 мăшăр алсапа нусакĕ, 1240 тир тата 70 [illegible] туса пачĕç.

Халăх хăйĕн Хĕрлĕ Çарне [illegible] юрални фронтра паттăррăн çапăçакан боецсем патне парнесем ярса панинче те уççăн курăнса тăрать. Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем патне фронта çĕнĕ çул ячĕпе 1.726 килограмм туртакан 120 посылка, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа ячĕпе 3.216 килограмм туртакан 244 посылка ярса пачĕç. Боецсем валли йĕлтĕрсем илме 12.641 тенкĕ укçа пухнă.

Рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем производствăра, колхозсен уй-хирĕсенче куллен хастарлăн ĕçлесе фронта пулăшаççĕ. Двухсотниксемпе трехсотниксене халĕ кашни предприятипе колхозрах йышлăн курма пулать. Комбинатăн 10-мĕш номерлĕ цехĕ, тĕслĕхрен, кашни уйăхрах продукци туса кăларас графика ирттерсе тултарать. Производствăра уйрăмах, коммунистсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Мастер Шигаев юлташ сменăри задание яланах вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа пырать. Коммунист Бутин столяр, хатĕр изделие пухса пĕрлештерес ответлă ĕçре нормăна 3 хут ытларах тултарса пырать, Моисеев, Корнеев коммунистсем те ĕç нормине куллен 2—3 хут ытларах тултарса ĕçлеççĕ.

«Партизан», «Красный Октябрь», механизациллĕ арман, çăкăр пĕçерекен куст, утильцех, лесхоз тата ытти предприятисемпе артельсем те нумай хут лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. «Красный Октябрь» артельри стахановец-тимĕрçĕсем Сазоновпа Белянский юлташсем ответлă заказсене пурнăçланă çĕрте ĕç нормине 300 процент таран тултараççĕ. «Партизан» артельре двухсотниксен йышĕ уйăхран уйăха ÿссе пырать.

Малта пыракан предприятисемпе колхозсен примерĕпе пĕтĕм халăха ĕçе хавхалантарса, фронтпа çĕршыва татах та вăйлăрах пулăшу пама çĕклесси пирĕн задача пулса тăрать. Анчах ĕçре юлса пыракан предприятисемпе колхозсем те пур-ха. Тĕслĕхрен, районри промкомбинат тата «Большевик» завод 1941 çулти ĕç планне тултараймарĕç, вĕсемех 1942 çулти январь уйăхĕнчи плана та пурнăçлаймарĕç.

Отечественнăй вăрçă вăхăчĕ пирĕнтен кашнинченех нумай хут лайăхрах ĕçлеме ыйтать. Çак тапхăрта плана тултараймасăр тăракан пĕр предприяти те, артель те пулмалла мар. Хĕрлĕ Çара пур енлĕн те вăйлăн пулăшса тăрасси—пирĕн задача. Фронта мĕн кирлине пурне те çителĕклĕ таран парса тăрассишĕн лайăхрах ĕçлер. Сталин юлташ лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлар.

А. ВАХНИН,

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ.

Элир стахановла ĕçлетпĕр

Паттăр Хĕрлĕ Çар отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пырать. Пирĕн воинсем тăшмана хирĕç вăя шеллемесĕр, кирлĕ чухне пурнăçа шеллемесĕр çапăçаççĕ.

Эпир пĕлетпĕр: тылра стахановла ĕçлени Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿсем тума пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн рабочисемпе работницăсем хальхи производствăра нихăçанхи пек мар пысăк хастарлăхпа ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Кĕскен хамăр цех ĕçĕ çинчен калатăп: пирĕн коллектив отечественнăй вăрçă кунĕсенче кашни уйăхрах хăйне панă заданисене ирттерсе тултарса пырать. Февраль уйăхĕн программине эпир 150 процент ытла тултартăмăр. Ку уйăхра вара татах та пысăкрах çитĕнÿ тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

Пирĕн цехра халь нормăна тултармасăр ĕçлекен рабочи çук. Производствăна пĕр уйăх каялла килсе кĕнĕ О. Федорова юлташ та нормăна 125 процентран кая мар тултарать.

П. Тимяшкина юлташултă уйăх хушшинче чи сложнăй станокпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Ун хыççăн ăна хăй тĕллĕн ĕçлеме тăратрĕç. Халĕ акă вăл куллен икшер норма тултарать.

Двухсотниксен йышĕ уйрăмах слесарьсемпе токарьсем тата электросварщиксем хушшинче ÿссе пырать. Вĕсенчен чылайăшĕсем нормăсене 220—250 процент тултараççĕ. Çапла, сăмахран, электросварщиксем Н. Моисеев, С. Шолемов, токарь Ярзаев, тимĕрçĕ Циглер, слесарь Блохин юлташсем февраль уйăхĕнче кашниех нормăсене 200—250 процент тултарса пынă.

Нумаях та пулмасть пирĕн цеха васкавлă заказ тума пачĕç. Ăна çавтери хăвăрт тумаллачĕ. Рабочисем заказа пурнăçлас тесе вăхăта пăхмасăр ĕçлерĕç. Стахановла ĕç—панă заказа срокчченех пурнăçлама пулăшрĕ. Çак вăхăтра ĕнтĕ стахановка Тимяшкина юлташ 16 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлерĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнă ятпа кăларнă приказа пирĕн рабочисем вуласа тухнă хыççăн кашниех ĕçри хăвăртлăхсене татах та ÿстерме, фронта пулăшассине вăйлатса пыма пулчĕç. Çавна вĕсем халь ĕçре пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

МИЛОРАДОВСКИЙ.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи 9-мĕш номерлĕ цехри старши мастер.

Вăрçă вăхатĕнчи налога тÿлеççĕ

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси ялсоветĕнчи А. Антонов, Г. Андреев, А. Семенов, А. Филиппов колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога çийĕнчех тÿлесе татрĕç. Активист колхозниксен ырă тĕслĕхне кура ялсоветĕнчи ытти колхозниксем те çав налога тÿлеме тытăнчĕç. Финагент Хлебников юлташ уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕ. Çавна май вăл Ярапайкасси ялсоветĕнче вăрçă вăхăтĕнчи налога пĕтĕмпех пухса çитерчĕ.

Ку ялсоветĕнчи колхозниксем Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) заем укçине те пĕтĕмпех парса татнă.

Г. ЯКОВЛЕВ.

ШАХАСАН. Енĕш ялсоветĕнчи ĕçхресченĕсем вăрçă вăхатĕнчи налога вăхăтра тÿлесе татассишĕн тăрăшаççĕ. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Т. Федоров, Т. Афанасьева, М. Алексеева, В. Данилова, Е. Шилинкова юлташсем çав налога пĕтĕмĕшпех тÿлесе татрĕç. «Красноармеец» колхозри В. Сергеев, П. Васильева, Л. Никитин, А. Ильин, Е. Алексеева, «Çĕнĕ пурнăç» колхозри Х. Матвеева, А. Никитин, А. Михайлова, Х. Викторова т. ыт. колхозниксем те государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра татас тĕлĕшпе ырă пример кăтартаççĕ.

Вăрçă вăхатĕнчи налога Вăрманкасси Енĕш ялсоветне кĕрекен «Свобода» колхоз членĕсем те тăрăшса тÿлеççĕ. Сăмахран, Н. Захаров, Н. Андреев, П. Иванов, Т. Васильева т. ыт. колхозниксем 100 процентпех тÿлесе татрĕç.

Г. ШАШКОВ.

* * *

СЕНТЕРВАРРИ. Çĕнĕ налога «Çĕнĕ ял» колхоз членĕсем срокчченех тÿлеççĕ. Вĕсенчен Андреев 300 тенкĕ, Захаров 400 тенкĕ, Егоров 400 тенкĕ, Владимирова 160 тенкĕ тÿлерĕç.

Н. А.

КОЛХОЗА КĔРЕÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хуракассинчи «Социализм» колхоза çак кунсенче единоличниксен 15 хуçалăхĕ кĕчĕ. Колхоз производствине вĕсем активлăн ĕçлеме тытăнчĕç.

В. ТРОФИМОВ.

Халăх учительници

Клавдия Ивановна Тетерина учительницăна нумайĕшĕ пĕлеççĕ. К. И. Тетерина Ишлей районĕнчи Ярапайкасси тулли мар вăтам шкулĕн директорĕ. Кунти шкулта вăл 38 çул ĕçлет. Ун патĕнче вĕренсе тухнă вуншар совет патриочĕсем тăван çĕршыва чĕререн юратнипе паянхи кун паллă ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем Клавдия Ивановнăпа тăтăшах çырăшу тытса тăраççĕ.

Акă пирĕн умра ун патне тĕрлĕ вырăнсенчен килнĕ çырусем. Ку çырусене Клавдия Ивановна патне унăн вĕреннекенĕсем пулнă çынсем çыраççĕ. Кирек хăш çырăва вуласа пăхсан та, вĕсен авторĕсем Клавдия Ивановнăна—ĕç çине юратса пăхма вĕрентнĕшĕн, çирĕп политикăллă воспитани панăшăн тав туни курăнать. Тĕслĕхрен, çав çырусенчен пĕрне, фронтран Степан Дашков янă çырăва, илер. Дашков ку çырăва хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе янă.

«Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунĕ ячĕпе хамăн воспитателе нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунса салам яратăп. Гитлера çĕр çинчен пăлса ывăтассишĕн пыракан çапăçура эпĕ хам пурнăçа шеллемесĕр çапăçассине пĕлсех тăрăр» тесе çырать Дашков юлташ хăйĕн çырăвĕнче.

Çак сăмахсем халăх учительницине питех те савăнтараççĕ. Çакăн пек çырусене вуласа хавхаланса, Клавдия Ивановна ачасене чăн-чăн коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе татах та ытларах тăрăшса ĕçлет. Вăл иртнĕ çулсене, хăй вĕрентнĕ çамрăксене аса илет. Акă Филипп Портнов пулнă,—вăл халĕ Мускаври аслă шкула пĕтерсе тухнă; Борис Енисеев—Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, фронта кайиччен Ишлей районĕнчи «Колхозник хаçачĕн» ответлă редакторĕ пулса ĕçленĕ; К. Смирнов—Мускаври горнăй институтран вĕренсе тухнă; Н. Корытников—Горькири индустриальнăй института вĕренсе пĕтернĕ тата ыт. те. Халĕ вĕсем пурте фронтра, юнлă Гитлерăн йытăкĕтĕвĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Вĕсем Клавдия Ивановна патне фронтран çырсах тăраççĕ. Çавăн пекех унăн воспитанникĕ пулнă тата хăйпе пĕрле шкулта учитель пулса ĕçленĕ Трифон Иванов та халĕ фронтра.

Клавдия Ивановна хăйĕн воспитанницăсем çинчен те манмасть. Акă Клавдия Портновăпа Нина Ильина—вĕсем «Красная Чувашия» колхозра бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Юлия Трофимова—«Автопилот» колхозри ферма заведующийĕ, Ишлей райсоветĕн депутачĕ; нумаях пулмасть вăл районри хаçатра хăйĕн ĕçĕсем çинчен çырса кăларчĕ—«Кулленхи ĕçре эпир пĕрмаях фронтăн вăй-хал хурса пыратпăр» тесе çырчĕ вăл. Çаксем хушшинчех тата Дарья Майкова,—вăл Горькири ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн агрономра ĕçлет; Дарья Васильева Шупашкарти Музыкăлла театр училищине вĕренсе пĕтерчĕ; Дарья Хлебникова Хусанти музыкальнăй институтра вĕренет тата ыттисем те... Вĕсем пурте комсомолкăсем.

Ярапайкассинчи çитĕннĕ çынсем хушшинче çырăва пĕлменни çукпа пĕрех. Çак пахa çитĕнÿ, пуринчен ытла, Клавдия Ивановна тăрăшнинчен килнĕ.

Клавдия Ивановнăн 15—16 çул каярахри ĕçĕсене аса илер. Хĕллехи вăхăтсенче ялти çамрăксем шкула пуханатчĕç. Çавăнтан пуçланса кайрĕ те вара ялти комсомол организацийĕ. Çав вăхăтра, 1925 çулта, Клавдия Иванова пуçарăвĕпе чи малтан комсомола кĕнĕ, комсомол воспитани парса ÿстернĕ Филипп Портновпа К. Смирнов хальхи вăхăтра лайăх инженерсем пулса ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтра Клавдия Ивановна хĕрарăмсем хушшинче организатор пулса ĕçлени те питех те кирлĕ ĕç пулса тăнă. Вăл ăнлантарса панипе хĕрарăмсемпе хĕрсем вăхăтра пĕрĕс çул тупнă. Çавăн пек учительница ăс панипе колхоза кĕнĕ Ольга Трофимова (комсомолка Юлия Трофимовăн амăшĕ) халĕ Клавдия Ивановнăна темĕн чухлĕ тав тăвать.

Тетеринăна вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăх туса пынăшăн 1939 çулта партипе правительство Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăларĕç. Вăл Мускаври Кремльре пулса аслă çулпуçне И. В. Сталина, М. И. Калинина, В. М. Молотова, К. Е. Ворошилова т. ыт. те курать. Вĕсене курнă сехете вăл хăй пурнăçĕнчи чи телейлĕ самант тесе шутлать.

Клавдия Ивановна, отечественнăй вăрçă пуçлансан, Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмаха колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Ярапайкасси ялсоветĕнчи ĕççыннисем Сталин юлташ чĕнсе калани çине мĕнле ĕçсемпе ответлени çинчен Клавдия Ивановна Шупашкартан радиопа тухса каланине эпир лайăх астăватпăр. Клавдия Ивановна ялсоветĕнчи агитколлектив руководителĕ пулса ĕçленĕ майпа, Ярапайкасси колхозникĕсем фронта пулăшассине кунран кунах вăйлатса пычĕç. Çавăн пекех, вăл пионерсемпе шкул ачисем хушшинче те калаçусем ирттернĕ хыççăн пионерсем Хĕрлĕ Çара кайнă çынсен çемйисене пулăшас тата колхозсенчи çамрăк выльăхсене шефа илес енĕпе пикенсе ĕçлеме тытăнчĕç.

Клавдия Ивановна вăрçă вăхăтĕнче пĕр хăй кăна çирĕм доклад туса ирттерни тата вăл агитколлективри ытти агитаторсене консультацисем парса тăни—колхозниксене Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас, парнесем ярса парас тата фронта тĕрлĕрен майсемпе пулăшас енĕпе те пысăк ĕçсем тума пулăшрĕ.

Клавдия Ивановна, Доронин ячĕпе тăракан колхозра «Цивильстрой» колхозниксен чĕнĕвне колхозниксем хушшинче сÿтсе явнă хыççăн, районри хаçатра:

«Чĕнĕве сÿтсе явнă хыççăнах, пухăва пынă колхозниксем пурте пĕр кăмăллă пулса, Хĕрлĕ Çар валли колхоз вăйĕпе тата уйрăм колхозниксен хуçалăхĕнче 1 вăкăр, 5 сурăх, 3 сысна çитĕнтерсе памашкăн тата 37 чăх, 2 хур, 5,5 килограмм çу, 840 штука çăмарта пухса пама пулчĕç» тесе çырчĕ.

Витĕмлĕ политикăллă агитаци ĕçне куллен туса пынипе пĕрлех, Клавдия Ивановна амалнă красноармеецсене пулăшассине те аван организацилерĕ. Ялсоветĕпе: 315 штука çăмарта, 91 чăх, 2 хур, 83 килограмм аш-какай, 6 сысна, 300 килограмм туртакан пĕр вăкăр, 5 сурăх, 29 килограмм çу, 5 килограмм пыл, 295 килограмм тулă çăнăхĕ, 238 тенкĕ укçа пухса пачĕç.

— Эпир Хĕрлĕ Çаршăн нимĕн те шеллеместпĕр; мĕн пурри йăлтах фронт валли!. Хамăрăн ывăлсемпе тăвансене, пиччĕшсемпе шăллĕсене, аппăсене пулăшма эпир яланах хатĕр,—теççĕ Ярапайкасси ялсоветĕнчи колхозниксем.

Уйрăм колхозниксене илсен, «Красная Чувашия» колхоз членĕ, орденоносец Максим Степанов (халĕ колхоз председателĕ) Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕтĕмпе—2 тир, пĕр сурăх, 60 тенкĕ укçа, 2 чăх, 20 çăмарта, пĕр мăшăр алса тата ыт. те пачĕ.

К. И. Тетерина тăрăшнипе Ярапайкасси колхозникĕсем фронтшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Большевиксен партийĕ тата аслă Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн çĕршывра К. И. Тетерина пек хĕрарăмсем гитлерла бандитсене çапса аркатас куна çывхартас тĕлĕшпе тăван çĕршывшăн пысăк ĕçсем тăваççĕ.

П. ЯКОВЛЕВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ тракторсемпе акара кирлĕ ытти машинăсене юсаса çитерчĕ

Мартăн 21-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай машинно-тракторнăй станцийĕ БКП(б) Обкомне тата Çĕр ĕç халăх комиссариатне МТС мартăн 20-мĕш тĕлне тракторсемпе çуракинче кирлĕ ытти ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса çитерни çинчен тата тырпул пухса кĕрес ĕçре кирлĕ машинăсене юсама тытăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Хĕрлĕ Чутай машинно-тракторнăй станцийĕн коллективĕ, хăйĕн ĕçне çăр вăхăтпе тивĕçлĕ пек туса пырса, мартăн 20-мĕш тĕлне капитальнăй ремонтран 7 трактор, текущи ремонтран 12 трактор юсаса кăларчĕ тата 4 трактора техника тĕлĕшĕнчен тĕпчесе тĕрĕслерĕ.

МТС трактористĕсемпе трактористкисем, ремонтри рабочисемпе служащисем кăçалхи уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тата вăхăтра туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен тĕнсе каланине коллектив пысăк хавхаланупа сӳтсе-яврĕ. Трактористка В. Пономарева, У-2 тракторпа иртнĕ çул 300 гектар сухаласа, планпа пăхнă задание ытлашшипех тултарнă. Кăçал вăл 500 гектар сухалама обязательство илчĕ.

Трактористка М. Мамуткина СТЗ-НАТИ тракторпа кăçал 900 гектартан кая мар сухалама тата горючипе сĕрмелли материалсене 7 процент таран перекетлесе хăварма обязательство илчĕ. Трактористсен бригадирĕн помощникĕ А. Александрова юлташ çуллахи вăхăтра икĕ çынна трактор ĕçне вĕрентме пулчĕ.

МТС коллективĕ кăçал ĕç тухăçне ылай хăпартрĕ. Уйрăмах трактористкăсем пысăк хавхаланупа ĕçлеççĕ. Трактористсем хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă 9 хĕрача вăрçă пуçлансанах машинно-тракторнăй станцине ĕçлеме пычĕç. Кăçал курсран татах 29 трактористка вĕрентсе кăларнă, 4 хĕрача Канашри механизаци шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ. Трактористкăсенчен 5 çынна тракторнăй бригада бригадирĕсен помощникĕсем пулса ĕçлеме уйăрнă.

Халĕ МТС коллективĕ тырпул пухса кĕмелли машинăсемпе ытти ялхуçалăх машинисене юсама пысăк тимлĕхпе тытăнчĕ. Коллективра кашни çын кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тăвассишĕн, вăл ĕçсене тума халĕ пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлет.

Шкул коллективĕ çураки умĕн

ВĂРНАР. Сталин юлташăн историллĕ приказне вуланă хыççăн районри шкулсенче ĕçлекен учительсемпе вĕренекенсем мĕнпур ĕçе çĕнĕ хавхаланупа, çĕнĕ хастарлăхпа туса пыма пуçларĕç. Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕ çумĕнчи профорганизаци хăй çине конкретнăй обязательствăсем илсе, шкулти вĕренӳ пахалăхĕшĕн, колхоза çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшса пырассишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕ.

Чи лайăх класнăй руководительсем Р. Тепловскаяпа Р. Артемьева пуçарнипе шкулти пур классенче те ялсоветне кĕрекен колхозсем валли ялхуçалăх инвентарĕсене пухас тата хатĕрлес ĕç сарăлса кайрĕ. Р. Тепловская класнăй руководитель пулса ĕçлекен VI-мĕш класри вĕренекенсем «Память Ленина» колхоза 8 чӳлĕк, 12 чĕлтĕр, плугсене кăкармалли 4 пăяв явса пачĕç, çав вăхăтрах ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем пухас ĕç те хĕрӳллĕн пырать. Класс колхоза 12 центнер кĕл пухса панă т. ыт. те.

ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ М. Ломоносова юлташ ертсе пыракан VII-мĕш класри вĕренекенсем те хăйсемпе ăмăртакан VI-мĕш класран кая юлмаççĕ. Вĕсем колхоз производствипе тачăн çыхăнса ĕçлеççĕ. VI-мĕш класăн пуçарăвне сӳтсе-явнă хыççăн вĕсем çапла каларĕç:

— Пирĕн çĕршыв хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пухса çĕнтерӳ тăвассишĕн кĕрешет. Пирĕн аттесемпе пиччесем юнлă фашизма хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Вара епле-ха кунта эпир алăсене усса ларăпăр? Эпир — пионерсем. Эпир—ленинецсем. Çавăнпа та пирĕн Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртес ĕçре чи малтисем пулмалла. Пĕтĕм вăя отличнăй вĕреннĕ çĕре хунипе пĕрлех çуракине хатĕрленес ĕçе те хутшăнăпăр.

VII-мĕш класс ялхуçалăх предметне юратса вĕренет. Кунта ĕнтĕ сӳресĕсем, пахча-çимĕç лартса тăвас ĕçри ăсталăхсем пур, вĕсене палăртсах хунă. Ака çураки çитсен, вĕсем пурте колхоз хирĕсене ĕçлеме тухĕç.

Çавăн пекех VIII-мĕш класра вĕренекенсем те çуракинче ĕçлеме пысăк панчăк параççĕ. Кунта ялхуçалăх ĕçĕнчи специальноçсене уйăрса хунă, кашни ача хăйĕн ăсталăхне мĕн май çитнĕ таран хăпартас тесе тимлĕн тăрăшать. И. Александров, Н. Егоров, В. Алексеев вĕренекенсем икĕ касăллă плугсемпе ĕçлеме, Яковлев, Григорьев, Вальков, Иванов вĕренекенсем сӳресĕсем пулса ĕçлеме хатĕрленеççĕ. Н. Иванов вĕренекенĕн ашшĕ темиçе çул хушши тракторпа ĕçлет.

— Эпĕ хамăн атте пекех тракторист пулатăп. Çавăнпа эпĕ ун çумĕнче плугарь пулса ĕçлĕп—тет вăл.

М. И. Калинин юлташăн «Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем çинчен» çырнă статьине тĕплĕн сӳтсе-явнă хыççăн IX-мĕшпе X-мĕш классенче вĕренекенсем пурте пĕр кăмăлпа çуракине хатĕрленес ĕçе тытăнчĕç. Кунта теорипе вĕреннине практикăра çирĕплетсе пыраççĕ.

Учительсен коллективĕ юлашки вăхăтра колхоз активĕпе тачăн çыхăнса ĕçлеме тытăнчĕ. Акана хатĕрленес тĕлĕшпе ялсоветне кĕрекен колхозсенче сахал мар çитменлĕхсем курăнаççĕ. Уйрăмăнах çĕрулмипе пахча-çимĕç лартса хăварас тата акара кирлĕ ялхуçалăх машинисене хатĕрлесе çитерес ĕç хăрушлăхра тăрать. Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхоз ку енĕпе юлса пыни сисĕнет. Çĕн Алтатри «Вол а» колхоз авăн çапса пĕтерменнипе пула вăрлăх фончĕсене уйăрса çитермен, уйхир ĕçĕн бригадисем валли ĕç вырăнĕсене палăртса хуман т. ыт. те. Шкулти профсоюз комитечĕ çаксене вăхăтра асăрхаса илсе, мĕнпур учительсемпе вĕренекенсене бригадăсене, колхозсене пулăшма ячĕ. Учительсем ку ĕçе пĕтĕм чĕререн туса пыраççĕ.

Н. Артемьев агитатор пулса ĕçлекен 2-мĕш бригада çуракине хатĕр мар пулнă. Плугсемпе сӳресем юр айĕнче, никам та пĕлмен вырăнта, хирте ларнă, турăм вăйĕпе кирек сĕр усă курнă т. ыт. те. Халĕ бригадăра ĕçсем самаях урăхланчĕç. Бригада çак çитес кунсенчех акана тухма пур енчен те хатĕрленсе çитет.

Т. Федотовăпа Т. Якимова агитаторсем те аван ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене çирĕплетнĕ бригадăн государство умĕнчи парăмĕсене татас тĕлĕшпе уйрăмăнах пысăк вăйя хурса ĕçлерĕç.

Çуракине хатĕрленес ĕçре колхозниксен шухăш-кăмăлĕсене çĕклентерсе пыни, вĕсене пирĕн отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи çитĕнӳсем çинчен вăхăтра каласа парса хавхалантарни те нумай пулăшать. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе фронтри эпизодсене колхозниксен масси патне çитерсе тăрас тĕлĕшпе Р. Тепловская, Р. Артемьева, С. Федоров, С. Беляева юлташсем маттур ĕçлеççĕ. Р. Тепловская агитатор пулса тăракан 3-мĕш бригадăри колхозниксем фронта ăшă тумтирсем, парнесем ярас тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç. Бригада боецсем патне виçĕ хутчен паха посылкăсем ячĕ.

Учительсем çуракинче ответлă ĕçсенче ĕçлеме хатĕрленеççĕ. Н. Артемьев—яровизатор, вăлах акнă вăхăтра сеяльщик пулса ĕçлет. Учительсенчен нумайĕшĕсем плугарьсем тата сӳресĕсем пулса ĕçлеме, учительницăсем пахча-çимĕç ĕçĕсен бригадирĕсем пулса ĕçлеме хапăрхăйне хатĕрлесе çитерне.

«Колхозри ĕçре хĕрарăмсем яланах пысăк вăй пулса тăнă,—тет Калинин юлташ.—Халĕ вăрçă вăхăтĕнче колхоз пурнăçĕнче хĕрарăм ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан татах та пысăк вырăн йышăнса тăрать». Çакна шута илсе учительницăсем Н. Верховцевăпа К. Эрасси юлташсем хĕрарăмсене уйхир ĕçне хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кунта вăрçă вучĕ алкăшнă совет районĕсенчен куçса килнисем хушшинче ĕçлесси те çӳллĕ вырăнта тăрать. Асăннă учительсем, эвакуаципе куçса килнисем хушшинче агитаци ĕçне туса пынипе пĕрлех, вĕсене тĕрлĕ ыйтусем енĕпе пулăшаççĕ.

— Хамăрăн тăван çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пĕтĕм чĕререн юратса тăнине эпир ĕçре кăтартăпăр. Пирĕн шкул вĕренӳ çулне отличнăй вĕçлĕ, пирĕн бригадăсем çуракипе ытти мĕнпур кампанисене отличнăй ирттерсе пырĕç,—теççĕ учительсем.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнчи профсоюз комитечĕн председателĕ.

Ялхуçалăх валли кадрсем хатĕрлетпĕр

Хĕрарăм-бригадирсем курсра вĕренчĕç

ШАХАСАН. Районри çĕрĕç пайĕ Ямаш ялсовечĕ таврашĕнчи колхозсенчи бригадăсен бригадирĕсене вĕрентмелли 10 кунлăх курс туса ирттерчĕ. Курсра уйхир ĕç бригадирĕсем, пахча-çимĕç бригадирĕсем тата химизаторсемпе яровизаторсем пурĕ 31 çын вĕренчĕç. Вĕсенчен 26-шĕ хĕрарăм-бригадирсем.

Г. ШАШКОВ.

Хăмла ĕрчетекен мастерсен курсĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Пирĕн республикăра хăмла лартса тăвас ĕç çулран çул сарăлса пырать. Çак ĕçре квалификациллĕ кадрсем ытларах та ытларах кирлĕ пулаççĕ. Çакна шута илсе, республикăри «Росхмель» конторĕ хăмла ĕрчетес ĕçĕн бригадирĕсене хатĕрлеме 10 кунлăх курс туса ирттерчĕ. Курсран Октябрьски, Çĕрпӳ, Вăрнар районĕсенчи колхозсенче хăмла ĕçĕн бригадирĕсем пулса ĕçлеме 21 çын вĕренсе тухрĕ.

А. СДИНЦОВ.

Уэллес тунă заявлени

ВАШИНГТОН, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Турцин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатĕнчи посолĕ Эртегюн государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес патĕнче пулнă. Каярахпа Уэллес пичет представителĕсене çапла пĕлтернĕ: эпир Турцин посолĕпе кивçен е арендăна хĕçпăшал памалли çинчен калаçнă закон тăрăх Америка материалĕсене Турцие йĕтес ыйтăва сӳтсе-яврăмăр,—тенĕ. Кивçен е арендăна хĕçпăшал памалли çинчен йышăннă закон тăрăх Турцие пулăшма кирли çинчен нумаях пулмасть кăна Рузвельт каланисене аса-тарса, Уэллес çапла каланă: Турция Америкăна панă çар материалĕсемшĕн халиччен укçа халлĕн тӳлесе пынă. Халĕ ĕнтĕ Турципе ăна хамăрăн кивçен е арендăна хĕçпăшал памалли закон тăрăх çар материалĕсем парас тĕлĕшпе калаçса татăлма пулать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Турцие çар материалĕсем хăвартрах йăсатма мĕн пулăшать, çавна пурне те тума тăрăшаççĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче самолетсем тăвас ĕç валли çĕнĕрен укçа-тенкĕ уйăрса парасси çинчен хатĕрленĕ проект

ВАШИНГТОН, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Пресс-конференцире Рузвельт çапла каланă: çар самолечĕсем туса кăлармашкăн конгресран татах та 17 миллиард та 570 миллион доллар хушса пама ыйтма шутлатăп, тенĕ. Рузвельтăн шучĕпе, çав тăрăх, малтан уйăрса панă укçа-тенкĕпе пĕрле çакă вăл 124.000 ытла самолет туса кăларма май парать.

Албани патриочĕсем Итали оккупанчĕсене хирĕç кĕрешеççĕ

СТАМБУЛ, мартăн 21-мĕш. (ТАСС). Албани халăхĕ Итали оккупанчĕсене хирĕç çаплах кĕрешме чарăнмасть. Албани халăхĕ хирĕç тăнине пĕтерсе хурас тесе, унăн захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвне урăх çĕрелле пăрса ярасшăн пулса, оккупациллĕ влаçсем христиансемпе мусульмансене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме пăхаççĕ. Пĕр вăхăтра Албанире пур хуласенче те мечетьсем çине хĕрессем çака-çака тухнă. Итальянецсем, çав хĕрессене христиансем çакнă тесе элек сарма пĕтĕм вăйран тăрăшнă пулсан та, халăхсем çав ĕç итальянецсемпе вĕсен агентурин хăйсен провокацийĕ пулнине часах сиссе илнĕ. Çавă усал шухăшпа тунă акт албанецсен кĕрешĕвне çĕнĕрен вăйлатса янă, Албанире пур хуласенче те тенĕ пек итальянецсене хирĕç çĕнĕрен çĕнĕ демонстрацисем пулса иртнĕ. Çав демонстрацисенче мусульмансем те, христиансем те пулнă. Демонстрантсем хĕрессене мечетьсем çинчен илсе анса урам тăрăх çакăн пек лозунгсемпе пынă: «Тăшман пире хирĕçтерсе пĕр-пĕринчен сивĕтес çук!» «Сывă пултăр ирĕклĕ Албания!», «Тĕп пултăр предательсем!».

Тиранăра темиçе пин çынлă демонстраци пуканелле «правительство» вырнаçнă çурт умне пырса оккупациллĕ влаçсен ирсĕр ĕçĕсене хирĕç протестленĕ. Полици демонстрантсене сапаласа ярасшăн пулнă, анчах та демонстрантсем полици çине чулпа пеме пуçланă. Вара полици пăшалсенчен пеме тытăннă. Корча, Аргирокастрон, Флора тата Шкодер хулисенче те демонстрантсемпе полици хушшинче юнлă тытăçусем пулса иртнĕ. Тытса илнĕ 5 хулара демонстрацире пулнă халăхсенчен 17 çынна вĕлернĕ, 50 çынна амантнă. Итальянецсенчен аманнисем 20 çын шутланаççĕ.

Партизанла движени Албанире саралнăçемĕн саралса пырать. Çурçĕр Албанире партизансем, итальянецсен горючи тата ытти япаласем тиенĕ 50 автомашинăран тăракан колоннирудникелле кайнине пĕлсен, икĕ ту хушшипе иртекен çул çинче засада тунă. Колонна хăйсен тĕлне çитсен, вĕсем чул-тăва сирпĕнтерсе ярса тăшмансен çулне пӳлсе лартнă. Колонна чарăннă. Партизансем ун çине гранатăсем ывăтнă, пăшалсенчен пенĕ. Хăшпĕр гранатăсем бензин тиенĕ машинăсене тивсе вĕсене çунтарса янă. Фашистсем хирĕç тăма пăхнă, анчах вĕсене партизансем пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкнă.

Февралĕн 20-мĕшĕнче Корча хули урамĕнче икĕ провокаторăн, Итали полицине сутăннăскерсен, виллисене тупнă. Çав вилесем çумне çакăн пек хут çырса çыпăçтарнă пулнă: «Албани халăхĕн предателĕсене пурне те çак шăпа кĕтет».

Бардоши отставкăна тухнин сăлтавĕсем

СТОКГОЛЬМ, мартăн 22-мĕш. (ТАСС). Швецире тухса тăракан «Эребру-Куриен»» хаçат, Венгрин премьер-министрĕ Бардоши отставкăна тухни çинчен каласа, Берлинра çавăн пирки кăмăлсăр пулнине кăтартса парать. Гитлеровецсен «Берлинер берзенцейтунг» хаçачĕ Бардошине «Германие Российăна хирĕç кĕрешес ĕçре Венгри енчен ытларах та ытларах пулăшу парса пырас политикăн чăн-чăн представителĕ» тесе каланăччĕ. Бардоши отставкăна тухни, çапла ĕнтĕ, çав пулăшăва чакарассине пĕлтерме пултарать,—тесе кăтартса парать «Эребру-Куриен» хаçат. Венгри çарĕнче Бардоши тытса пынă политикăна хирĕç тăракансем сахал пулман. Генеральнăй штаб начальникĕн Верт генералăн, акă, отставкăна тухмалла пулнă, мĕншĕн тесессĕн вăл Германие паракан пулăшăва чакарма кирли çинчен каланă. Бардоши отставкăна тухнă хыççăн Венгрин политики Германи майлах юлать, анчах та çакă вăл Бардоши чухнехи пекех мар пулать.

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕш. (ТАСС). «Ди цейтунг» хаçат Венгрире пулса иртнĕ событисем çинчен тĕплĕнрех çырса пĕлтерет. Гитлер çуркуннехи наступлени валли Венгрирен 500 пин салтак, пуринчен ытла кавалери чаçĕсем, ыйтнă. Çак пулăшу вырăнне Венгрия Италирен Фиумăри ирĕклĕ зонăна илмелле пулнă. Анчах Бардоши çак сĕнĕве йышăнма шут тытнине хирĕç парламентра та, çĕршывра та çавтери вăйлăн тухса каласнă та, Бардошин вара ирĕксĕрех отставкăна тухмалла пулнă. Венгрин çар министрĕ Барта çапла каланă: эпĕ мобилизаци туса кавалери чаçĕсем пухма пултараймастăп, мĕншĕн тесен çапла туни вăл ялхуçалăхне юхăнтарса ярать, тенĕ.

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Риомри судăн мартăн 18-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Франсуа, Ренэн тата Миттельгаузер генералсем свидетель показанийĕсене панă. Франсуа генерал, Мажино линийĕ вĕçленнĕ тĕлти Лонгви районне хӳтĕлекен войскăсене командир пулса ертсе пынăскер, Гавас-ОФИ агентстви суд ларăвĕ çинчен пачă тенденциллĕ отчет тăрăх пăхсан та, войскăсен шухăш-кăмăлĕ çирĕп пулнине тата вĕсем хăйсен тивĕçлĕхне питĕ лайăх пурнăçа кĕртсе пынине пытарса хăвармa пултарайман. Анчах та вăл хăйĕн показанийĕсенче войскăсене хĕçпăшал çителĕксĕр парса тăнă пек кăтартса пама хăтланнă. Франсуа генералăн çав заявленийĕсене тепĕр свидетель Ренэн генерал сирсе янă. Вăл — кадровăй чаçсене хĕçпăшал çителĕклĕ парса тăнă, зенитнăй артиллери кăна çителĕксĕр пулнă, тесе кăтартса панă.

Франци çарĕнчи салтаксен шухăш-кăмăлĕ çирĕп пулни çинчен, çавăн пекех Альпăри армин командующийĕ пулнă Миттельгаузер генерал та каласа панă. Свидетель высши военнăй совета вăл танксемпе мĕнле усă курасси çинчен вĕçĕ-хĕррисĕр дискусси туса ларнă тесе, анчах практикăллă опыта тĕпчесе пĕлме тăрăшман тесе айăпланă. «1937 çулта та, — тенĕ Миттельгаузер, — эпир танксен маневрĕсене пĕрре те туса ирттерме пултараймарăмăр». Свидетель çавăн пекех тата çарăн высши командованийĕ штурмовой авиацин çапăçури вырăнне хакламаннине те кăтартса панă. Нимĕçсем Норвегие тапăнса кĕнĕ хыççăн Миттельгаузер, çав вăхăтра Англире пулнăскер, «пикировка тăвакан бомбардировщиксем мĕнле хăрушлăх кӳресси çинчен Гамелена асăрхаттарнă. Анчах çакă вăл ун чухне кая юлса тунă ĕç пулнă». Свидетель малалла çапла каланă: иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче Оффор генерал 1914 çулти малтанхи пораженисенчен хăйне валли тивĕçлĕ уроксем илме пултарнине кăтартса панă пулсан, Гамелен генерал вара пачах урăхла тунă.

Вăрçăра поражени тӳснин айăпне Миттельгаузер генерал кучухнехи хĕçпăшал пулманни çине тата командирсен кадрĕсем çителĕксĕр пулни çине тӳнтерме пăхнă. Кунта вара Даладье хăйне сăмах пама ыйтнă. Вăл Миттельгаузерăн 1937 тата 1938 çулсенчи доклачĕсене илсе вуласа панă. Ун чухне Миттельгаузер генерал Франци çарĕн генеральнăй инспекторĕ пулса тăнă. Асăннă докладсенче Франци çарне кучухнехи хĕçпăшал парса хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунине палăртнă пулнă. Миттельгаузер çарта кадровăй офицерсем çитменни çинчен калани пирки сăмах хускатса, Даладье Миттельгаузертан: — кадровăй офицерсем мĕн чухлĕ кирлĕ пулнă вара? — тесе ыйтнă. Свидетель: — 29.600 офицер кирлĕ пулнă, — тесе ответленĕ.

— 1939 çулта пирĕн 37.000 офицер пулнă, урăхла каласан, малтан палăртнă хисепрен 7.400 офицер ытларах, — тесе кăшкăрса янă Даладье.

Кунта малтанхи хут Гамелен хăйне сăмах пама ыйтнă. Вăл та 1939 çулта офицерсен йышĕ 1914 çултинчен нумайрах пулнине çирĕплетсе панă. Даладье панă ыйту çине ответлесе, Миттельгаузер çакна йышăннă: 1938 çулти июль уйăхĕ тĕлне Францин кучухнехи танксен хисепĕ 34 танк кăна пулнă, пĕр çулталӑк иртсен вара 3.000 танкран иртсе кайнă, — тенĕ.

Гитлеровецсем Литва халăхне çаратса пĕтересе выçă хăвараççĕ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Швецири «Социал демократен» хаçачĕн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нимĕç оккупанчĕсем Литвара хуçаланса пурăнни Литва хресченĕсене питех те хытă тарăхтарать. Хресченсем оккупантсене курайманаççĕ, вĕсем Германин Балтика тавралĕнчи çĕршывсене колонизацилемелли планĕсене тăшманла кĕтсе илнĕ. Оккупантсем Литва хресченĕсене Германи çарĕ валли ялхуçалăх продукчĕсем, чи малтан тырпула çĕрулми, çавтери нумай пама хушаççĕ. Çав йывăр приказа пурнăçа кĕртес пулсан, Литва хресченĕсем пуçĕпех выçă тăрса юлнă пулĕччĕç тата çуракине ирттереймен пулĕччĕç. Нимĕçсен Литвара çӳрекен укçисем нимĕн хаке та тăмаççĕ, вĕсемпе нимĕн те илме çук. Çĕршывра халь ĕнтĕ нимĕнле промышленность таварĕ те, нимĕнле ялхуçалăх орудийĕ те сутмаççĕ. Спекуляци вăйлăн саралнă. Ялсенче ĕç вăйĕсем çитмеççĕ. Нимĕç оккупанчĕсем вăрман хатĕрлевĕнче, çулĕр строительствинче хресченсене ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă. Оккупантсем Литва хресченĕсене лашисене илсе кайса пĕтерчĕ.

Гитлеровецсен планĕсем

СТОКГОЛЬМ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен «Тевальшенцейтер» хаçачĕ фон Раунтенфельд тенĕскерĕн статьине пичетленĕ. Вăл унта, хăй сисмен çĕртенех, Латви, Литва тата Эстони çĕршывĕсенчен Германи провинцийĕсем туса хумалли тата Балтика тавралĕнчи çĕршывсенче нимĕç баронĕсен влаçне тавăрмалли гитлерла план çинчен сӳпĕлтетсе парать. Автор, литовецсемпе эстонецсене тата латышсене «нимĕçсем енчен ертсе пыни кирлĕ» тесе тата «çак çĕршывсенче пурăнакансене нимĕçсем çеç ертсе пыма пултараççĕ», тесе литовецсемпе эстонецсенчен, латышсенчен мыскаллать. Автор, «Балтика тавралĕнчи çĕршывсенче Балтика нимĕçĕсем пуç пулса тăнине тата вĕсен халăха ертсе пырас ĕçри уйрăм прависене эстонецсемпе латышсем йышăнма тивĕç», тесе çемсĕррĕн ыйтать. Балтика çĕршывĕсенчи халăхсене «кĕçĕн раса» вырăнне хунипе палăртас шутпа, «Германи расин тасалăхне палăртас мар» тесе, гитлерла влаçсем нимĕçсене Балтика çĕршывĕсенчи халăхсен представителĕсемпе мăшăрланма чаракан приказ кăларнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи вăрçă ĕçĕсем

(Юлашки телеграммăсене пăхса тухни)

Ливи фронтĕнче юлашки эрне хушшинче çĕр çинчи войскăсем, хăйсен разведка тăвакан пысăках мар отрячĕсемпе усă курса, оборона тытас тĕлĕшпе çапăçусем туса пынă. Икĕ енĕ те çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ, хăйсем йышăннă позицисене çирĕплетеççĕ, хĕçпăшал турттарса пыраççĕ, çыхăну линийĕсене йĕркелеççĕ. Нимĕçсем хăйсен Дернран пуçласа Эль Мекили патне каçакан линине çирĕплетеççĕ. Англичансем хăйсен линине çирĕплетеççĕ. Çак икĕ лини хушшинче талккишĕпех хăйăрлă вырăнсем, унта икĕ енчен те патрульсемпе куçса çӳрекен колоннăсем пĕр-пĕринпе çапăçаççĕ.

Юлашки кунсенче Германи авиацийĕ Ливире хăйĕн тактикине улăштарнă. Унччен нимĕçсем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе Англин малти позицийĕсем çине бомбăсем пăрахас тĕлĕшпе усă курнă, Англи çарĕн чылай шалти тылне сайра-хутра çеç вĕçсе пырса тапăннă пулнă. Халĕ нимĕçсем англичансен 18 уйăх хушши вăрçă туса пыракан тактикине йышăннă, нимĕçсем халĕ Англин коммуникацийĕсене хирĕç тăрăшĕпех вăйлăнрах çапăçса пыма тытăннă. Чугунçулсем çине тата шоссе çулĕсем çине юлашки кунсенче темиçе хут та вĕçсе пырса тапăннă.

Англи авиацийĕ тăшманăн Ливири питĕ те кирлĕ порчĕсем çине, Бенгазипе Триполи çине бомбăсем пăрахас ĕçе малалла туса пынă, çавăн пекех тата противникăн Киренаикăри аэродромĕсем çине темиçе хутчен те вĕçсе пырса тапăннă.

Кунсăр пуçне, Англи самолечĕсем Крит утравĕн кăнтăр пайĕнчи тĕрлĕрен объекчĕсем çине, Сицилири Катания порчĕ çине, противник йышăнса илнĕ Грецин Пирей ятлă порчĕ çине тата Италин стратеги тĕлĕшпе питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан Родос утравĕ çине сĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă.

Çывăх Хĕвелтухăçне Англин çĕнĕ йышши самолечĕсем—торпедоносецсем пырса çитнĕ хыççăн противникăн тинĕс çинчи караванĕсене атакăласси вăйланнă. Сăмахран, мартăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем тăшманăн икĕ судни çине торпедăсем янă.

Çавăнпа пĕрлех Мальта тĕлĕнче сывлăшри çапăçусем малтанхи пекех вăйлăн пыраççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Мартăн 19-мĕшпе 21-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Çĕнĕ Гвинея тата Çĕнĕ Британи утравĕсем çинче халĕ те активлă вăрçă операцийĕсем пыраççĕ. Союзниксен авиацийĕ Японин тинĕсри тата сывлăшри вăйĕсене хирĕç çапăçать. Япони войскисем Çĕнĕ Гвинея утравĕн çурçĕр енчи çыранĕ хĕрне тата Çĕнĕ Британи утравĕ çине анса юлнă та хăйсем йышăнса илнĕ территори çинче çирĕпленсе лараççĕ, çавăнта çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ. Войскăсем анса юлнă пунктсенче çар карапĕсем, транспортсемпе тĕрлĕрен суднăсем нумай пухăнса тăнă. Союзниксен авиацийĕ Японин çав тинĕс-çар вăйĕсемпе çĕр çинчи çар объекчĕсене хирĕç ăнăçлă операцисем туса ирттерет. Çак операцисене Австрали авиацийĕн тата Америкăн «вĕçекен крепость» йышши йывăр бомбардировщикĕсем те хутшăнаççĕ.

Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, иртнĕ 10 кун хушшинче Çĕнĕ Гвинея утравĕн хĕррисенче Японин 23 суднине путарнă е хытах сиенленĕ. Çавăн пекех тата Çĕнĕ Британи утравĕ патĕнче те Японин темиçе суднине путарнă тата сиенленĕ. Çĕнĕ Гвинея патĕнче Японин икĕ йывăр крейсерне путарнă, пĕр крейсерне хытă сиенленĕ, çав крейсер путнă пулĕ тесе шутлаççĕ. Унсăр пуçне пĕр крейсера сиенленĕ, 3 эсминеца путарнă тата пĕр эсминеца сиенленĕ пулмалла. Транспортсемпе грузсем турттаракан пароходсенчен 5 суднăна путарнă е хытă сиенленĕ. Ытти суднăсене те сиен кӳнисем пулнă, сиенленнĕ суднăсем хушшинче пĕр гидро-авианосец тата икĕ канонерка пур.

Юлашки кунсенче Австралипе Америкăн самолечĕсем çавăн пекех тата Японин суднисене Çĕнĕ Британи утравĕнчи Рабаул портĕнче те атакăланă. Çав атакăсем вăхăтĕнче икĕ крейсера путарнă. Ытти çар объекчĕсем çине те вĕçсе пырса тапăннă, çав объектсем хытах сиенленнĕ. Японин авиацийĕ хăй енчен Çĕнĕ Гвинея утравĕн кăнтăр пайĕнчи Морсби порчĕ çине тата Австралин çурçĕрти çыранĕ хĕрринчи чылай пунктсем çине, сăмахран, Дарвин порчĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Юлашки кунсенче пулса иртнĕ операцисем японецсем малтанхинчен чылай пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулнине кăтартса параççĕ. Австралие союзниксен çĕнĕ вăйĕсем нумай пырса çитнĕ тата халĕ те пырсах тăраççĕ. Çавна пула Австралин оборони вăйланнă çеç те мар, союзниксем кунта малтанхинчен чылай активлă операцисем ирттерме тытăннă; союзниксем çапăçури пуçарулăха хăйсен аллине тытса илессишĕн.

Филиппин утравĕсем çинче икĕ енĕ те пысăк операцисемех туса ирттермен. Мартăн 17-мĕшĕнче японецсем Батаан çурутравĕ çинче (Лусон утравĕ) Америкăпа Филиппин войскисен позицийĕсене атакăланă. Анчах та çав атакăна ăнăçлăнах сирсе пăрахнă. Çакăн хыççăн кунта каллех вăрçă ĕçĕсем лăпланнă.

Бирмăра Тоунгу тата Брэм хулисенчен кăнтăр енче пысăках мар çапăçусем пыраççĕ, çав çапăçусем, пуринчен ытларах, патрульсем пĕр-пĕрине тытăçса илнисем пулса тăраççĕ. Фронтăн çурçĕр участокĕнче, Китай чаçĕсем кĕрешнĕ çĕрте, Японин офицерĕсем ертсе пыракан Таи войскисем наступленине пуçласа яма хăтланаççăн. Голланди Индийĕн тĕрлĕрен районĕсенче çапăçусем халĕ те пыраççĕ. Юлашки кунсенче Ява утравĕн çурçĕр енчи пайĕнче, Суматра утравĕн çурçĕр енчи пайĕнче тата Целебес утравĕ çинче çапăçусем пулса иртнĕ. Голланди Индийĕн уйрăм чаçĕсем японецсене халĕ те хирĕç тăрса çапăçаççĕ. (ТАСС).

Нимĕç салтакĕсем тарăхаççĕ

Англин «Ньюс Кроникл» хаçачĕ çапла пĕлтерет: Францие сывалма пынă нимĕç салтакĕсем хăйсем Российăри фронтра мĕн тӳссе курнисем çинчен калама тытăнсан йĕрсе макăрса яраççĕ, пĕтĕмпех сын йĕркинчен тухаççĕ.

Тата çапла та пĕлтереççĕ: нумаях пулмасть Францире пĕр кинотеатрта Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă хроникине кăтартнă, çав хроникăра нимĕçсен положенийĕ лайăх пек курăннă. Залра пулнă нимĕç салтакĕсем «суя» тесе кăшкăрса янă. Офицерсем тарма тытăннă та вара çапăçу пуçланса кайнă. Офицерсем револьверсенчен пеме тытăннă. Пĕлтернĕ тăрăх, çав тытăçура 6 нимĕçе вĕлернĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 694 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 269. Ф. 6. 58 64 п. л.